ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
24
ЫТЛАРИКУН
№ 38 (8947)
35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Февралĕн 22-мĕшĕнче пирĕн Чăваш АССР-ĕнчи ĕçсыннисем выранти Советсен депутачĕсене суйларĕç. Суйлавçăсем, пурте пĕр кăмăллă пулса коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет Правительстви тавра, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартса пачĕç.

СОВЕТ ХАЛĂХĔН МОРАЛЛĔ-ПОЛИТИКĂЛЛĂ ПĔРЛĔХĔ

Февралĕн 22-мĕшĕнче ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсен суйлавĕ пулса иртрĕ. Суйлав пур çĕрте те политикăллă пысăк çĕкленÿпе иртрĕ. Суйлав совет халăхĕн моралле-политикăллă пĕрлĕхне, вăл Ленин—Сталин партийĕн ăслă ĕçне, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçе чун-чĕререн парăнса тăнине кăтартса пачĕ.

Суйлав кунĕнче кашни совет патриочĕ умне хамăр Тăван çĕршыв утса тухнă çул, кĕрешÿре çĕнтерÿсен мухтавлă çулĕ çĕнĕрен яр-уççăн тухса тăчĕ. Пирĕн кĕрешÿпе çĕнтерÿсен çулĕ Коммунистсен партийĕпе, Ленинпа Сталин ячĕсемпе тачă çыхăнса тăрать. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем пĕтĕм тĕнчипе историллĕ пысăк çитĕнÿсем турĕç. 1917 çулта çĕршыва капитализм сăнчăрĕ татăлчĕ, капиталистсемпе помещиксен пуç пулса пурăнасси пĕтрĕ. Çак çĕнтерÿ пирки Сталин юлташ хăйĕн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕнче çапла калать:

«Общество пĕтсе пыракан вăйĕсене тĕп тума «общество вăйĕ кирлĕ. Çавăн пек вăй пирĕн çĕршыва тупăнчĕ, вăл вăй—общество нумай ытларахăшĕ пулса тăракан рабочи класпа хресченсен союзĕ пулчĕ... Çакна пула совет власĕ общество кивĕ вăйĕсене çĕмĕрсе тăкма пултарчĕ, производительлă вăйсен характерĕпе обязательлĕ килĕшсе тăмалла тесен экономикăлла закон вăра пирĕн патра пулма ирĕк илчĕ».

Çакă вăл çĕршывăн экономикăлла вăйхăватне этемлĕх халиччен нихçан курман пысăк хăвăртлăхсемпе малалла аталантарма май пачĕ. Халăх хуçалăхне индустриализацилени, ялхуçалăхне коллективизацилени ленинла-сталинла политикăна пурнăçлани пирĕн çĕршыва кая юлнăлăхне пĕтерчĕ, вăл хăватлă индустриллĕ-колхозлă держава пулса тăчĕ.

Социализмлă Тăван çĕршыв мĕнпур тĕрлĕ çĕнтерÿçĕ пулса тухрĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет халăхĕ хăйĕн ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне чыслăн хÿтĕлесе хăварчĕ. Совет Союзĕ аслă çĕнтерÿпе Европăпа Азири нумай халăхсене капитализм пусмăрĕнчен ирĕке тухма, социализм çулĕ çине тăма май пачĕ. Совет халăхĕ пĕтĕм тĕнче цивилизацине фашистла тискер кайăксенчен сыхласа хăварчĕ.

Вăрçă хыççăнхи вăхăтра Совет çыннисем çĕршывăн экономикине малалла вăйлă аталантарчĕç. Социализмлă экономика хăватлан вăйланнă никĕс çинче халăх пурнăçĕ лайăхланса, унăн культури ÿссе пырать.

Пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсен организаторĕ тата хавхалантаракан Ленин—Сталин партийĕ пулчĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ суйлавçăсем суйлав урнисем патне Ленинпа Сталин ячĕсене чĕрере тытса пычĕç, вĕсене тулли кăмăлпа, ăшă сăмахсемпе тав турĕç.

Партипе халăхăн пĕрлĕхне, халăх коммунистсен паттăр партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине кăтартса паракан аслă ят вăл пирĕн çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Иосиф Виссарионович Сталин ячĕ пулать. Сталин юлташ—пĕтĕм халăхăн пĕрремĕш депутачĕ. Ăна Мускаври, Ленинградри тата ытти хуласемпе ялсенчи ĕçсыннисем выранти Советсене депутата суйлама кандидата тăратнă. Çакă вăл совет çыннисем хăйсен çулпуçĕпе учительне чун-чĕререн юратнине тата парăннине, Ленин ялавĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме хатĕр тăнине кăтартса пачĕ.

Иртнĕ суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерÿ турĕ. Пĕрлĕхлĕ коллектива пĕрлешнĕ совет çыннисем, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн, коммунизм ĕçĕшĕн сасăларĕç, пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн тăнине, хăйсен революцилле сыхăлăхне ÿстерсе пырассишĕн кĕрешнине кăтартса пачĕç.

Суйлавçăсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсем çинчен чĕререн тухакан сăмахсемпе каласа пачĕç, хăйсен гражданла тивĕçне савăнăçлăн пурнăçларĕç.

— Аслă Сталиншăн!
— Тăван çĕршывшăн!
— Коммунизмшăн!
— Миршĕн!

Çак сăмахсене каласа сасăларĕç суйлавçăсем.

— Эпĕ 80 çула çитнĕ,—тенĕ Шупашкар хулинчи 5-мĕш суйлав участокĕнче чи малтан сасăланă Истопленников юлташ,—вĕсенчен 44 çулне патша саманинчи йывăр та тертлĕ пурнăçпа пурăнса ирттернĕ. Нумай тарăхнă, нумай тÿснĕ. Халĕ тавралла пăхатăп та—пур çĕрте те пурнăç вĕрет, кунтан-кун çĕршыв чечекленет. Мана, ватă çынна, государство пенси парса пулăшать. Совет влаçĕ кăна телейлĕ те тулăх пурнăç туса пачĕ. Çавăншăн эпĕ Сталин юлташа тав тăватăп, çавăншăн çĕнтерÿсем миршĕн сасăлатăп.

Совет халăхĕ выранти Советсене хăйĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсене депутата суйларĕ. Вĕсем выранти Советсен ĕçне кирлĕ пек пысăк пулăшу парĕç. Халĕ партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе выранти Советсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре çитĕнÿсем выранти Советсен пултарулăхĕнчен чылай килет. Вĕсем партипе правительство директивисене пурнăçласа пыма, ĕçсыннисене коммунизм строительствин задачисене пурнăçлас ĕçе мобилизацилесе пыма, выранти хуçалăхпа культура строительствине ертсе пыма тивĕçлĕ.

Депутата суйлама тăратнă кандидатсемпе тĕл пулнă чухне суйлавçăсем нумай сĕнÿсемпе асăрхаттарусем пачĕç. Выранти Советсен çĕнĕ составĕ çав сĕнÿсене пурне те тĕплĕн тишкерсе тата илчĕр тата кулян пурнăçласа пычăр.

Сталин юлташ депутат мĕнле пулмалли çинчен тĕплĕн кăтартса пачĕ. Вăл çапла калать: «Суйлавçăсен, халăхăн хăйсен депутачĕсене çакна ыйтмалла: депутатсем хăйсен задачисен çÿлĕшĕнче тăччăр; вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăлла обывательсен картне анса ан ларччăр; вĕсем Ленин сăнарлă политикăлла деятельсен выранĕ тăччăр; вĕсем, Ленин пекех, яр уçă та паллă деятельсем пулччăр; вĕсем, Ленин пекех, кĕрешÿре нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччăр; вĕсем, ĕç йывăрланнă пусăсенче, горизонтра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан, кирек мĕнле хăраса ÿкесрен те, кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те, Ленин пекех, ирĕклĕ пулччăр; вĕсем кирек мĕнле хăраса ÿкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччăр; пысăк ыйтусене татса панă чухне, пур енлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур енчен те шута илмелле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, çĕçе аслă та васкамасăр тăвакансем пулччăр; вĕсем, Ленин пекех, тĕрĕс те тÿрĕ кăмăллă пулччăр; вĕсем хамăр халăха, ăна Ленин юратнă пекех, юратчăр».

Депутатсен çак ăслă сăмахсене яланах асра тытас пулать.

Пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв хăйĕн вăйĕсем чечекленсе ÿснĕ тапхăрта пурăнать, вăл çĕнĕ çитĕнÿсем патнелле пырать. Коммунизмла обществăна пĕтĕмпех туса çитерме мĕн кирли пирĕн пурте пур. Совет çĕршывĕн çутçанталăкри пуянлăхĕсем иксĕлми нумай. Пирĕн государство çак пысăк пуянлăхсемпе ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн усă курма пултарнине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕ çĕнĕ общество тума пĕлнине кăтартса пачĕ, вăл малалла шанчăклă пăхать.

Выранти Советсен иртнĕ суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çĕнтерни совет халăхĕ хăй умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлама хатĕр тăнине кăтартса пачĕ. Çав задачăсем чăннипех те питĕ пысăк. Пирĕн халăх вĕсене пурнăçлассишĕн вăя шеллемесĕр, çине тăрса кĕрешет.

Ленин ялавĕпе, Сталин юлташ ертсе пынипе, малалла—коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

ССР Союзĕн Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1953 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. №30. Мускав хули.

Юлташсем — салтаксемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсемпе генералсем!

Паян совет воинĕсем пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Пирĕн аслă çулпуçсем Ленинпа Сталин туса хунă Совет Çарĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе чаплă кĕрешÿ çулĕпе утса пычĕ, хăйĕн ялавĕсене граждан вăрçи тата Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче ĕмĕрлĕхе мухтава кăларчĕ.

Халĕ, совет халăхĕ партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă коммунизм тумалли аслă задачăсене ăнăçлă татса панă вăхăтра, пирĕн Çар, яланхи пекех, совет халăхĕн мирлĕ ĕçне шанчăклăн сыхлать, Совет Союзĕн государство интересĕсене тимлĕн хураллаcа тăрать.

Совет Çарĕн салтакĕсене, сержанчĕсене, офицерĕсене тата генералĕсене Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 35 çул тултарнă ятпа саламлатăп тата сывлăх сунатăп.

Çарăн пĕтĕм личнăй составне боевой тата политикăллă вĕренÿре, сыхăлăха тата боевой хатĕрленĕве хăпартас ĕçре малалла çитĕнÿсем тума ырă сунатăп.

Уяв ячĕпе çапла ПРИКАЗ ПАРАТĂП:

Паян, 1953 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршыв столицинче—Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче, çавăн пекех Калининградра, Львовра, Хабаровскра, Владивостокра тата герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре, Одессăра тупăсенчен çирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă социализмлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр паттăр совет халăхĕ тата унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр аслă Ленин—Сталин партийĕ—пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсен хавхалантаракан организаторĕ!

Пирĕн ăслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕре, гениллĕ полководеца Аслă Сталина мухтав!

ССР Союзĕн Çар Министрĕ

Совет Союзĕн Маршалĕ ***А. ВАСИЛЕВСКИЙ.***

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕн ПРИКАЗĔ

1953 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. №15. Мускав хули.

Юлташсем — матроссемпе салтаксем, старшинасемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Паян ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Вăйĕсен личнăй составĕ пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине уявлать.

Совет халăхĕ çак уява экономикăпа культурăн мĕнпур облаçĕсенче, пирĕн Аслă Тăван çĕршывăн активлă оборонине тĕреклетес ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе паллă тăвать.

Пирĕн аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ кăтартса панисене тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, Тинĕс-Çар Вăйĕсен личнăй составĕ карапсемпе чăссен боевой пултарулăхне ывăнма пĕлмесĕр хăпартать, хăйĕн Тăван çĕршывĕн тинĕсри чиккисене сыхă хураллать.

Çар морякĕсен задачи хăйсем çар ĕçне тата политикăна пĕлессине малашне те çине тăрса хăпартасси, кĕрешÿ ăсталăхне лайăхлатасси, кучухнехи техникăпа хĕçпăшала вĕренсе çитесси, отличниксен йышне ÿстерессси, сыхăлăха вăйлатасси, çар дисциплинине тата хамăр ретри организацилĕхе çÿлерех пусăма çĕклесси пулать.

Юлташсем — матроссемпе салтаксем, старшинасемпе сержантсем!

Юлташсем — офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Сире Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнă ятпа саламласа сывлăх сунатăп! Сире çар ĕçне тата политикăна вĕренес ĕçре малашне те çитĕнÿсем туса пыма ырă сунатăп.

Сывă пулччăр Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр паттăр Совет халăхĕ!

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет Правительстви!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ — пирĕн çĕнтерÿсен хавхалантараканĕпе организаторĕ!

Сывă пултăр пирĕн юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, гениллĕ полководец — Аслă Сталин!

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ

Вице-адмирал ***Н. КУЗНЕЦОВ.***

ССР Союзĕн çар Министерствин савăнăçлă ларăвĕ

Февралĕн 21-мĕшĕнче Мускавра Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнă ятпа ССР Союзĕн Çар Министерстви столицăри партипе совет тата обществăллă организацисен представителĕсемпе пĕрле савăнăçлă лару ирттернĕ.

Совет Çарĕн Центральнăй театрне уяв чухнехи пек илемлетнĕ. Сценăн шал енче—пирĕн Тăван çĕршывăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене тăвакансен—В. И. Ленинпа И. В. Сталин портречĕсем.

Çапăçури ялавсем патĕнче хисеплĕ хуралта пехотинецсем, моряксем, артиллеристсем, летчиксем, танкистсемпе кавалеристсем тăраççĕ.

Театрăн залне офицерсем, генералсем, Мускаври предприятисенчи стахановецсем, партипе совет работникĕсем, наукăпа культура деятелĕсем пухăннă.

Савăнăçлă ларăва Совет Союзĕн Маршалĕ В. Д. Соколовский уçнă.

Хисеплĕ президиума Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн И. В. Сталин юлташ ертсе пыракан Президиумне суйлаççĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен ССР Союзĕн Çар Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ А. М. Василевский доклад тунă.

Савăнăçлă ларура пулнисем пысăк хавхаланупа И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă. (ТАСС).

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министерствин савăнăçлă ларăвĕ

Февралĕн 21-мĕшĕнче Мускавра Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнă ятпа ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министерствин савăнăçлă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Союзсен Çурчĕн уяв чухнехи пек илемлетнĕ Колоннăллă залне çар морякĕсем, офицерсем, генералсемпе адмиралсем, çавăн пекех столицăри партипе совет тата обществăллă организацисен представителĕсем пухăннă.

Савăнăçлă ларăва ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ вице-адмирал Н. Г. Кузнецов уçнă.

Ларура пулнисем хисеплĕ президиума Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Президиумне тата ăна ертсе пыракана—совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçне, гениллĕ полководеца И. В. Сталин юлташа суйланă.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен вице-адмирал Н. И. Виноградов доклад тунă.

Докладчик паттăр совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене, Коммунистсен аслă партине, Совет правительствине, юратнă çулпуçа тата гениллĕ полководеца Сталин юлташа хисеплесе саламланă чухне залра нумайччен тăвăллăн алă çупнă.

Савăнăçлă ларура пулнисем патриотла пысăк çĕкленÿпе И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă. (ТАСС).

Аслă Сталин ятне чĕрере тытса

Ир. Мускав иллюминаци çуттисемпе тата çутатакан транспарантсемпе ялкăшать. Пĕтĕм халăх уявĕ—ĕçсынни депутачĕсен выранти Совечĕсен суйлавĕ пулни пур çĕрте те сисĕнет. Урамсене ялавсемпе илемлетнĕ, çуртсем çинче—илемлĕ плакатсем.

Мускав çыннисем, ытти пĕтĕм совет çыннисем пекех, суйлав кунне политикăлла тата ĕçлĕхлĕ пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç.

Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕ. Кунта ĕçсынни депутачĕсен хула тата область Советне депутата суйланма Иосиф Виссарионович Сталин баллотировкăна тăнă.

1-мĕш суйлав участокĕнче малтан сасăлакансем хушшинче пенсионер С. И. Голосков тата 18 çулхи Юлия Артемкина бюллетеньсем илеççĕ. Вĕсем, икĕ ăру представителĕсем, суйлава иккĕш те пĕр шухăшпа, Тăван çĕршыва, партие, Сталин юлташа вĕçĕмсĕр юратса пынă. Çакă ирхи сехетсенче 23-мĕш суйлав участокĕнче машинăсем тăвакан заводри литейщик И. Г. Королев, унăн çемйин членĕсем, çак заводри тата ытти предприятисенчи рабочисем, инженерсем, служащисем бюллетеньсене урнăна яраççĕ.

Участока пыракан суйлавçăсен йышĕ ÿссех пырать.

Мускав çыннисемпе пĕрле Тăван Сталиншăн столицăна Совет Союзĕн тĕрлĕ хулисенчен ĕçпе килнĕ пиншер çын сасăлать.

Кăнтăрла 12 сехет тĕлне Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте сасăласа пĕтерне.

Столицăри Ленински, Молотовски, Калинински, Сокольники, Пролетарски тата ытти районсенчи суйлав участокĕсене те уяв чухнехи пек илемлетнĕ. Кунта пĕтĕмпе 7 пин çын ытла баллотировкăна тăнă. Депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче И. В. Сталин юлташăн соратникĕсем—Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсем. (ТАСС).

ЛЕНИН ХУЛИНЧЕ

ЛЕНИНГРАД, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян хула уяв чухнехи пек капăр тумланнă. Çуртсем çинче — хĕрлĕ ялавсем, И. В. Сталин, партипе правительство руководителĕсен портречĕсем. Суйлав участокĕсен çурчĕсем çап-çутă çуталса тăраççĕ. Сасăлама тытăниччен чылай малтан унта суйлавçăсем пыма пуçланă.

Выборг енĕ. Сталински суйлав округĕ. Кунта ĕçсынни депутачĕсен Ленинград область Советне тата хула Советне депутата суйланма совет халăхĕн аслă çулпуçĕ Иосиф Виссарионович Сталин баллотировкăна тăнă. И. В. Сталин ячĕпе тăракан тимĕр-тăмăр заводĕнчи, «Красный выборжец», «Пролетарий» заводсенчи рабочисем пысăк хаваслăхпа сасăлаççĕ. Çак заводсем коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене пурнăçлаççĕ. Ирхине 10 сехет тĕлне Сталински суйлав округĕнче мĕнпур суйлавçăсем хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçланă.

Ытти округсенче те сасăласси пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Государство влаçĕн выранти органĕсене депутата суйлама халăхăн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн, Ленин—Сталин партийĕн ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăнине хăйсен паттăр ĕçĕпе кăтартса панă тата активлă обществăллă ĕçре палăрнă çынсемшĕн сасăланă. Кандидатсем хушшинче Кировски заводри мартен цехĕнче ĕçлекен чи лайăх сталевар Н. М. Морозов, чаплă разметчик Г. М. Дубинин, «Русский дизель» заводри стахановец Н. П. Казмышкин, Социализмлă Ĕç Геройĕ, «Ручьи» совхозри звеньевой М. Н. Никитина тата ыттисем те.

Суйлав Ленинград çыннисем Коммунистсен партине, Совет правительствине, совет халăхĕн аслă çулпуçне Сталин юлташа чĕререн вĕçĕмсĕр юратнине яр-уççăн кăтартса пачĕ.

Партишĕн, аслă Сталиншăн

КИЕВ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). СССР тата Украина ССР государство ялавĕсене çил вăраххăн хумхантарать. Шевченко ячĕпе тăракан бульвар, Ленин, Владимирски, Лысенко, Коцюбинский тата ытти урамсем уяв тумĕпе витĕннĕ. Ку вăл Сталински район. Кунта область тата хула Советне аслă Сталин депутата суйланать.

«Ленинская кузница» завод клубĕ умĕнче таçтан курăнакан хĕрлĕ пусма çине: «Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин ертсе пынипе, малалла — коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!» тесе çырса хунă. Сасăлама пуçличчен чылай малтан суйлав участокне нумай рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем пынă. Урнăна чи малтан токарь-стахановец Лысков юлташ бюллетень ярать.

Суйлав участокне рабочисем, ученăйсем, инженерсем, служащисем, студентсем, кил хуçи хĕрарăмĕсем пыраççĕ. Киев çыннисемпе пĕрле Сталински суйлав округĕнче Харьковран, Львовран, Каховкăран тата республикăри ытти хуласемпе ялсенчен килнĕ нумай çынсем сасăлаççĕ.

Аслă Сталин юлташăн ытти соратникĕсем баллотировкăна тăнă округсенче те сасăласси пысăк çĕкленÿпе иртнĕ.

Депутата суйланма баллотировкăна тăнисем хушшинче хулари паллă çынсем: Сталинла премии лауреачĕ токарь-скоростник Виталий Семинский, каменщик Иван Рахманин, пăрахут капитанĕ П. Гурин тата ыттисем те пур.

Совет çыннисен телейĕшĕн

ТБИЛИСИ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Тбилиси уяв чухнехи пек капăр. Хулари ĕçсыннисем суйлав участокĕсене хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçлама пынă.

Плеханов ячĕпе тăракан клуб — аслă Сталин Тбилиси область Совечĕпе хула Советне депутата суйланма баллотировкăна тăнă суйлав округĕсен центрĕ. Суйлавçăсем хушшинче çулпуçăн ячĕпе çыхăнса тăракан, пăравуссемпе вагонсем юсакан заводри рабочисем нумай. Вĕсем паян аслă Сталиншăн, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн сасăлаççĕ. Вагон юсакансем хăйсен бюллетенĕсене хумханса урнăна яраççĕ. Вĕсенчен кашниех аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр нумай-нумай çулсем хушши пурăнтăр, тесе шухăшлать. Акă урна патне паллă стахановец-токарь Илья Чумбуридзе пырать. Вăл предприятире Куйбышеври В. Колесов новатор меслечĕпе пуринчен малтан усă курнă. Вăл детальсем туса хатĕрлессине ултă хут хăвăртлатнă.

Гори хулинче пурăнакан ватă суйлавçă Александр Цихитатришвили сасăлама право паракан удостоверенипе сасăлама пынă.

Ытти суйлав округĕсенче те суйлавсем организованно тата активлă иртеççĕ. Вĕсенче область Совечĕпе хула Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Тбилиси хулинчи чи лайăх çынсемшĕн сасăлаççĕ. Вĕсем хушшинче — коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем: пустав фабрикинче ĕçлекен мастер Анна Лекишвили, трамвайпа троллейбус управленийĕнче ĕçлекен слесарь Лидия Мамулашвили, Политехника институтĕнче ĕçлекен профессор Георгий Мухадзе, Сталинла премии лауреачĕ, поэт Георгий Леонидзе тата ыттисем те.

Грузи столицинчи выранти Советсен суйлавĕ совет çыннисем аслă Ленин — Сталин партине юратнине тата чунтан-чĕререн парăнса тăнине яр-уççăн кăтартса пачĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнине Шупашкарта уявлани

Ĕнер Шупашкарта, Советсен Çурчĕн Пысăк залĕнче, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарнă ятпа хулари обществăллă организацисен представителĕсен савăнăçлă ларăвĕ пулчĕ.

Президиумра—партипе совет организацийĕсен руководителĕсем, обществăллă организацисен представителĕсем.

Лару, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума КПСС Центральнăй Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Президиумĕн составне суйларĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен Н. С. Татаркин юлташ доклад туса пачĕ.

Лару пысăк çĕкленÿпе халăхсен аслă çулпуçĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Куславкка районĕ вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

КУСЛАВККА, февралĕн 23-мĕшĕ. (Телеграфпа). Районти колхозниксем, выранти Советсен суйлавĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра государство валли вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарчĕç. Февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне район йывăç касса хатĕрлемелли плана 115 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана—100 процент, турттарса кăлармалли плана—107,8 процент тултарчĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмах «Правда», «Динамо», Молотов ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан, «Коммунар», «Большевик» колхозсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Халĕ районти колхозниксем Тăван çĕршыв валли планран ирттерсе йывăç хатĕрлеççĕ.

Н. СМЫКОВ,
Куславкка райсовет исполкомĕн председателĕ.

М. ЕВДОКИМОВ,
КПСС райкомĕн секретарĕ.

Суйлав кунĕ—пĕтĕм халăх праçникĕ

Февралĕн 22-мĕшĕ республикăри хуласемпе ялсенче

Халăх савăнăçĕ

Пушшар хӳ паян ирех вăранчĕ. Капăр тумланнă суйлавçăсем урамра та, пĕчченшерĕн те сасăламалли çурта утаççĕ. Урамсенче хут купăс сасси, хавасăн кулса калаçни, савăнăçлă юрăсем илтĕнеççĕ. Суйлавçăсем хăйсен аслă правине пурнăçлама каяççĕ.

Суйлав çурчĕ. Ăна тултан та, шалтан та илемлетнĕ. Пӳлĕмсенче таса та çутă. Суйлавçăсем кунта тул çутăличчен чылай малтан пухăнма пуçларĕç. Пурте малăйĕн шуса пыракан сехет йĕпписем улттă тĕлне çитессе кĕтеççĕ.

Кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Суйлав комиссийĕн председателĕ А. Толстов юлташ, суйлавçăсене пĕтĕм халăх уявĕ ячĕпе саламласа, сасăлама чĕнчĕ.

Малтанхи бюллетеньсене вăтă суйлавçă А. Белов, М. Захаров юлташсем илчĕç.

— Эпĕ 65 çулта. Паян суйлава чунчĕререн савăнса килтĕм. Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăласа, эпĕ Тăван çĕршывшăн, аслă Сталиншăн, коммунизмшăн сасăларăм, — тет А. Белов бюллетеньсене суйлав ещĕкне ярса.

Çĕсем хыççăн М. Митрофанова учительница, паллă колхозница А. Тарасова, комсомолец А. Захаров, Г. Смирновпа О. Смирнова, Н. Лысовпа А. Лысова çамрăк мăшăрсем бюллетеньсем илчĕç. Суйлав пӳлĕмĕнчен вĕсем хĕпĕртесе тухрĕç.

Сасăланă суйлавçăсен хисепĕ ӳсесемĕн ӳсет. Малтанхи сехетре 219 суйлавçă сасăларĕ.

Ялтан ултă километрта вăрман варринче ларакан Сучково поселокĕнчен те вĕçĕ-хĕррисĕр лавсем килеççĕ. Вăрман пунктĕнче ĕçлекен рабочисенчен чи малтан Е. Абасеев, В. Спиридонов, П. Корольков суйлавçăсем бюллетеньсем илчĕç.

Канмалли пӳлĕмре ăшă та таса. Патефон, хутгупăс вылять. Чылайăшĕн чарăнса тăраççĕ кунта суйлавçăсем: ташлаççĕ, юрлаççĕ, савăнаççĕ.

«Большевик» колхозăн клубне Кăтшăри суйлав участокĕ вырнаçнă. Клуб умĕнче аслă Сталинăн пысăк портречĕ, тĕрлĕ лозунгсемпе плакатсем.

Халăх туллиех. Пĕрисем хаçат-журнал тата кĕнекесем вулаççĕ. Теприсем справка сĕтелĕ умĕнче хăйсен заем облигацийĕсене тĕрĕслеççĕ. Агитпункăн тепĕр пӳлĕмĕнче аккордеон вылять. Кунта та суйлавçăсем юрлаççĕ, ташлаççĕ, савăнаççĕ. Чăн-чăн уяв!

Суйлав пӳлĕмĕ таса та çутă. Чӳречисем умĕнче занавескăсем. Мĕн тери мастер алăсем тунă кабинăсене. Суллă краскăпа тĕкĕр евĕр сăн курăнмалла сăрланă вĕсене.

Суйлав пӳлĕмне тăвата çамрăк пырса кĕчĕç. Вĕсем кăçал пирвайхи хут суйлава кĕреççĕ.

— Аслă Сталиншăн! Тăван çĕршывшăн! Коммунизмшăн! Миршĕн! — тесе бюллетеньсем яраççĕ вĕсем.

Тăхăр сехет тĕлнелле пур суйлавçăсем те сасăларĕç.

Клубăн пысăк залĕнче суйлавçăсем «Коммунизмăн аслă стройкисем» темăпа доклад итлерĕç. Концерт пуçланчĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Етĕрне районĕ.

Шупашкар хулинчи 16-мĕш суйлав участокĕнче.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: суйлавçăсем бюллетеньсене суйлав ещĕкне яраççĕ (сулахайран сылтăмалла)—И. Д. Данилов инженерпа унăн арăмĕ СофияСергеевна, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри экономистка Т. М. Богатырева.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Суйлавçăсен активлăхĕ

КУСЛАВКА, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Сталинла пилĕкçуллăхсенче ӳссе сарăлнă поселок паян кăвак шусăмлах вăранчĕ. Унăн стандартлă çуртсемпе урамĕсем рабочисемпе, служащисемпе тата колхозникесемпе тулчĕç. Вĕсем ялахх пек ĕçе мар—суйлава каяççĕ.

Виççĕмĕш суйлав участокĕ. Вăл рабочисен клубĕнче вырнаçнă. Клуба шалтан та, тултан та çав тери илемлетнĕ. Кĕнĕ çĕрте «Ырă сунса кĕтетпĕр!», тесе çырнă. Алăкĕн икĕ енче Ленинпа Сталинăн пысăк портречĕсем.

Суйлавçăсем çулпуççен çăнĕсем çине ăшшăн пăхса илеççĕ те, вĕсен ячĕсене чĕрере тытса, суйлав бюллетеньсем паракан сĕтелсем патне пыраççĕ.

Чи малтан çуртсем тăвакан заводри паллă стахановка-комсомолка Нина Атмалкина сасăлать. Хăйĕн гражданла тивĕçне пурнăçласа, вăл çапла калать:

— Суйлав кунне эпĕ февральти нормăна тултарнипе кĕтсе илтĕм. Паян тулли кăмăлпа сасăласа, эпĕ малашне тата тухăçлăрах ĕçлеме пулатăп.

Суйлав ещĕкĕ патне вăтă рабочи Ленин—Сталин парти членĕ В. Н. Никифоров пырать. Унăн пурнăçне ĕçĕ заводпа çыхăннă. Завод ăна, ĕç инвалидне, çурт лартса панă.

— Тăванăм Сталин юлташа,—тет вăл бюллетеньсене ещĕке ярса.—Вăл туса панă пире çак телейлĕ пурнăçа...

Комисси членĕсем ларакан сĕтел патне Тухватуллин лейтенант пырать. Вăл, Совет Çарĕнчен отпуска килнĕскер, удостоверени тăрăх сасăлать.

Умлăн-хыçлăн тухаççĕ суйлавçăсем сасăламалли пӳлĕмрен. Хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçланисем хушшинче врач Н. Павлова, фотограф М. Хузяханов, учительница М. Казанцева, буфетчица О. Иванова, килхуçи хĕрарăмĕ П. Васина.

Пысăк залра оркестр вальс вылять. Çамрăксем ташлаççĕ. Вĕсем хушшинче паян пĕрремĕш хут сасăланă Зуфар Валеев, Валентина Ларионова тата ыттисем те.

— Эпĕ завод директорĕшĕн Коваленко юлташшăн сасăларăм,—тет Зуфар.

— Эпĕ хамăн сасса райком секретарĕшĕн Евдокимов юлташшăн патăм, — тет В. Ларионова.

Коридорта заводăн паллă çыннисем тăраççĕ. П. Янчиников рабочи коммунальнăй пай начальникне Д. Липатов юлташа алă тытса сывлăх сунать. Иккĕшĕн те савăнăç. Вĕсем вырăнти Совета суйлаççĕ тата хăйсем те суйланаççĕ.

Заводра чи вăтă рабочи В. Вирясов, хăй 80 çулта пулин те, производствăра ĕçлеме пăрахман. Анчах паян вăл суйлав участокне пырайманскер иккен. Çавăнпа комисси членĕ А. Гусов юлташ ун патне пĕчĕк ещĕкпе кайса килчĕ.

Куславккари виççĕмĕш суйлав участокĕнче районта чи пысăкки. Унта район Советне икĕ депутат, поселок Советне 9 депутат суйлаççĕ. Кăнтăрла иртнĕ тĕле суйлавçăсем пурте пекех сасăлама ĕлкĕрнĕ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Сталиншăн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн

Пирĕншĕн, тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государство гражданĕсемшĕн, савăнăçлă та нихçан асран кайми хавасла кунсем сахал мар пулаççĕ. Çав кунсене пирĕн халăх аслă уяв кунĕ пек чаплăн паллă тăвать.

Çавăн пек асран кайми кун пулчĕ кăçалхи февралĕн 22-мĕшĕ—вырăнти Советсене суйламалли кун.

Ялакних пекех, республикăри ĕççыннисем çак чаплă куна ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе паллă тума тăрăшрĕç. Чылай предприятисемпе артельсен коллективĕсем, колхозниксем суйлав кунĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлерĕç.

Вырăнти Советсен суйлав кунĕ. Çак куна кашни ĕççынни, кашни суйлавçă чĕререн кĕтнĕ. Вĕсем суйлав участокĕсене пурса государствăн пысăк ĕçне, хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçларĕç. Телейлĕ малашлăха ӳссĕн курса, асăрхан та аслă плансене пурнăçласишĕн ырми-канми ĕçлеме тупа турĕç. Кашни суйлавçă суйлав участокĕнче, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсен ячĕсене çырнă бюллетеньсем илсе, халăхсен аслă çулпуçне, юратнă учителĕмĕр хаклă Сталин ятне асăнать. Çав хаклă ята чĕрере тытса, бюллетеньсем ямалли ещĕк патне пырать.

Çурçĕр иртсен 3—4 сехетрех хула урамĕсем тăрăх суйлавçăсем нумайăн утма пуçларĕç. Пурте вĕсем суйлав участокĕсене васкаççĕ.

«Электрик» клубра 14-мĕш суйлав участокĕ вырнаçнă. Клуба шалтан та, тултан та илемлетнĕ. «Ырă сунса кĕтетпĕр», тесе çырни электричество çуттипе инçетренех курăнать.

Суйлав бюллетеньсем ямалли урна патне, юратнă Сталин юлташ портречĕн икĕ енĕпе, завод коллективĕ ĕçре кĕрешӳре çĕнсе илнĕ Хĕрлĕ ялавсем. СССР Министрĕсен Совечĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕсем кашни рабочие работница суйлав кунне хатĕрленсе мĕнле ĕçленине ӳссĕн кăтартса параççĕ.

Ултă сехет çитнĕ чухне суйлавçăсем патне участокри суйлав комиссийĕн председателĕ Р. Гринев юлташ тухать. Вăл суйлавçăсене суйлав кунĕ ячĕпе саламлать, бюллетеньсем илсе сасăлама вăхăт çитни çинчен пĕлтерет.

Çав самантра радио тăрăх Совет Союзĕн Гимнĕ кĕвви хăватлăн янăраса каять.

Суйлавçăсем сасăлама тытăнаççĕ. Бюллетеньсем ямалли урна патне чи малтан пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен Александр Степанович Елфимов пырать. Тăван çĕршыва планран ирттерсе продукци парассипĕн ырми-канми ĕçленĕ вăл, сменăри заданине яланах ирттерсе тултарма тăрăшнă.

— Телейлĕ пурнăçшăн, коммунизмшăн,—терĕ вăл бюллетене урнăна ярса.

Сасăламалли пӳлĕмрен çамрăк суйлавçă Раиса Страхова хаваслăн тухрĕ.

—Паян эпĕ питĕ телейлĕ. Сталинла Конституци панă аслă правăсене усă курса суйлава хутшăнатăп. Хамăрăн юратнă кандидат Т. А. Ахазов юлташшăн сасăласа, эпĕ пире телейлĕ те тулăх пурнăç туса панă аслă Сталиншăн, Тăван çĕршыв вăйлăхĕшĕн сасăлатăп. Конституци панă аслă правăсемпе усă курса, эпĕ ĕçлетĕп, çак вăхăтрах ĕçрен уйрăлмасăр вăтам шкулта вĕренетĕп. Советсен суйлавĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, февраль уйăхĕнчи задание 205 процент пурнăçларăм.

Суйлав кунне малтанхи хут сасăлакан çамрăксем уйрăмах хавасланса асăнаççĕ. Вĕсемшĕн çак кун ĕмĕр асран каймин кун пулса юлать. Акă Лидия Маркушина, Нина Рудакова, Николай Осипов, Галя Патюшкина çамрăксем бюллетеньсем илчĕç. Паян вĕсем малтанхи хут сасăлаççĕ.

Капиталистлă çĕршывсенчи суйлавсенче ĕççыннисене суйлава хутшăнтарас мар тесе тĕрлĕ чăрмавсем шыраса тупаççĕ. Çул çинче е чирлĕ пулнă пирки вуншар пин çын сасăламасăр юлать.

Пирĕн çĕршывра кашни суйлавçă пысăк хисепре, кашни çын хăйне панă гражданла правăсемпе тулли усă курать.

— Районтан Шупашкара вăхăтлăха килтĕм. Сасăлама ирĕк парăр,—тет удостоверени кăтартса Е. Прокопьев суйлавçă. Çавăн пек удостоверенисемпе кунта 70 çын ытла сасăланă.

Суйлав участокне суйлавçăсем пырсах тăраççĕ. Рабочисем, служащисем, студентсем, врачсем, ученăйсем, килхуçи хĕрарăмĕсем. Пурте вĕсем пĕр шухăш-туйăмпа, пĕр ĕмĕтпе килеççĕ. Кашнин чĕринче пĕр тĕллев.

— Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлар. Тăван çĕршыва, партие, аслă Сталина хĕрӳллĕ юратнипе, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн ырми-канми ĕçлеме яланах хатĕррине тата тепĕр хут кăтартса парар!

Малтанхи сехет хушшинче 360 суйлавçă пырса сасăларĕ. Кăнтăрла иртнĕ тĕле список тăрăх 1.855 суйлавçăран пурте пекех суйлав участокне пырса хăйсен сассисене коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн пачĕç.

Çĕрле, 24 сехет. Мускавра халĕ те сасăлаççĕ-ха. Çак вăхăтра кунта суйлав ещĕксене уçса бюллетеньсене шутлама тытăнаççĕ. Чылай бюллетеньсем çине суйлавçăсем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене палăртса хĕрӳ сăмахсем çырнă. «Аслă Сталина мухтав!», «Эпĕ телейлĕ пурнăçшăн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн сасăларăм», «Тивĕçлĕ кандидат», «Депутат ятне таса тыт» тата ытти тĕрлĕ ăшă сăмахсем.

Суйлавçăсем пурте хăйсен сассисене Т. А. Ахазовшăн, П. В. Занкиншăн, К. А. Александровшăн, А. В. Кузнецовшăн, В. М. Митрофановшăн, П. П. Кирилловшăн, А. А. Артемьевшăн, П. Г. Шуваловшăн панă.

Н. МИНИН.

Социализмлă культурăна чечеклентерессишĕн

Шупашкар хулинчи 16-мĕш участокри суйлав комиссийĕ ĕçлекен çурта — арçын ачасен 4-мĕш вăтам шкулне февралĕн 22-мĕшĕнче ирхине ирех халăх пухăнма пуçларĕ. Чи малтанах суйлав комиссийĕн членĕсем килсе, хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен ячĕсене çырнă бюллетеньсене округсем тăрăх йĕркелесе хучĕç. Çак участокри суйлава округсем тăрăх суйлавçа И. Ф. Федоров каменщик, А. Д. Буркова врач, çамрăк педагог П. В. Попов, Чăваш совет писателĕсен союзĕн правлени председателĕ М. Д. Шумилов (Уйăп Мишши), Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла премии лауреачĕ Ф. М. Лукин тата ытти юлташсен кандидатурисене регистрациленĕ. Суйлав участокĕнчи 9 суйлав округĕ тăрăх хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем—коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем. Вĕсене пурне те Ленин—Сталин партийĕ пăхса ӳстернĕ.

Телейлĕ те савăнăçлă çĕршывăн пирĕн ĕççыннисем çак кунсенче партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавхаланса ĕçлеççĕ. Вĕсем паян суйлав участокне съезд решенийĕсене ăнăçлă пурнăçлас...

Ултă сехет. Суйлав комиссийĕн председателĕ А. М. Никулин юлташ, суйлавçăсене пĕтĕм халăх уявĕ ячĕпе саламласа, сасăлама тытăнма чĕнчĕ. Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри бюллетеньсем илме пуçларĕç. Чи малтан электроаппаратура заводĕнчи вăтă рабочи Г. А. Толстов сасăларĕ.

Пир-авăр комбинатĕнче грузчик пулса ĕçлекен Ольга Сергеева, Чăвашсен педагогика институтĕнче иккĕмĕш курсра вĕренекен Валентин Федотов комсомолец, килхуçи хĕрарăмĕ Анна Попова, Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ пулнă Сергей Пустыльников шофер, çамрăксен театрĕн работникĕ Алексей Симолкин тата ыттисем те паян суйлав ещĕкне чи малтан бюллетень ярас ĕмĕтпе килнĕ. Малтанхи суйлавçăсем хушшинче 70 çултан иртнĕ Екатерина Николаевна Тарасова, 76 çулхи Алексей Петрович Сучков тата ытти юлташсене курма тĕл килчĕ. Хăйсен тивĕçне пурнăçлама суйлавçăсем ушкăнăн-ушкăнăн та, пĕчченшерĕн те килсех тăраççĕ. Акă, Чăвашсен педагогика институтĕнче вĕренекен В. Николаева, Р. Иванова, Р. Борцова студенткăсем пĕр ушкăнпа пырса тухрĕç.

Социализмлă культура вăйлă аталанни...

çă хăйне ун чухне панă ударник грамотине халĕ те тинтерлĕ сыхласа усрать. 1939 çулта вăл Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх выставкине, Мускава кайса килнĕ. Унăн вичĕ ывăл. Иккĕшĕ Шупашкарта учитель пулса, пĕри — Мускавра инженер пулса ĕçлеççĕ. Сталинла Конституци панă аслă правăсемпе усă курса, ыттисем тата колхозник ывăл-хĕрĕсем паллă учреждени çитĕ çуни халĕ сахал мар.

Пирĕн ĕççыннисен суйлав кунĕнче сасăлама çемйи-çемйипе пырас йăла пур. И. Д. Данилов инженер тата унăн арăмĕ С. С. Вишневская бухгалтер суйлав участокне пĕрле пычĕç. Ашшĕне амăшĕ сасăлама пынă чухне вĕсен юратнă ывăлĕ Леонид та килте тăрса юлман. Электроаппаратура заводĕнче экономист пулса ĕçлекен Т. Богатырева суйлав участокне ывăлне илсе пынă. Сасăласа пулсан хыççăн вĕсем зала кĕчĕç. Кунта юрă ансамблĕн концерчĕ пырать.

Кăнтăрла çитнĕ тĕле участокри пур суйлавçăсем те тенĕ пек сасăласа пĕтерчĕç. Суйлавçăсем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн пĕр çын пек сасăларĕç. Ленин—Сталин партийĕн никам çĕнтерейми...

Урпашра

СĔНТĔР, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Плакатсемпе илемлетнĕ çуртсем, таçтан инçетрен илтĕнекен хутгупăс сассисем, капăр тумланнă çынсем урамра хавасла утни, вăрт-вăрт иртсе каякан çăмăл çунасем паян ирех Урпашра суйлав кунĕ пуçланнине пĕлтереççĕ.

Чи малтан тата пĕрремĕш хут сасăлакан Е. Ижуркова, Урпашри вăтам шкулта 9-мĕш класра вĕренекенскер, алла бюллетень илсе урна умĕнче çăмах тухса калать:

— Сталин атте пире телейлĕ пурнăç туса пачĕ, — терĕ вăл.—Сталин юлташ кăтартнă çулпа ăнăçлăн малалла кайăпăр. Эпĕ паян тăтах та лайăх, телейлĕ пурнăçшăн сасăлатăп.

Унтан 63 çулхи вăтă коммунист А. Агадеев сасăларĕ. Вăл та Сталин юлташ пире телей пани çинчен каларĕ. Акă тата 80 çула çывхарнă Н. Савельев хăй пек вăтă С. Ижедеров патне пырса тăчĕ те:

— Çапла, ĕлĕкхи мар çав. Ĕлĕк пулсан, укçалла суйлаттăç. Пире çывăха та ямастăç. Халĕ мĕн калассИ пур, телейлĕ халь çамрăксем,—терĕ вăл.

Унтан вăл, шур сухална сăтăрса илсе, хăйĕн тусне ыйтрĕ:

— Сывах-и, Степан,—терĕ.

— Аван пулмасăр, Микихвер, — отвечет лешĕ,—кăнт-ха концерт курмă. Çамрăксемпе çамрăк чĕрĕ пулăпăр.

Вăл вăтă халăхпа пĕрле зала кĕреççĕ. Часах А. Варюхина ирттерсе пынипе шкул ачисем концерт пуçларĕç.

Суйлав питĕ йĕркеллĕ иртрĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефонпа). Ирех, ултă сехетченех, хула урамĕсенче халăх йышлăн утма тытăнчĕ. Суйлавçăсем чаррах суйлав участокĕсене çитсе, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама васкаççĕ.

27-мĕш суйлав участокĕ. Вăл хулари иккĕмĕш шкулта вырнаçнă. Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ А. И. Оборин юлташ ултă сехетре суйлавçăсене суйлав кунĕ ячĕпе саламларĕ, вĕсене хăйсен гражданла тивĕçне пурнăçлама чĕнчĕ.

Суйлав комиссийĕн членĕсем ларакан сĕтел умне пурнăçра хура-шурă курнă хыççăн телейлĕ пурнăç патне çитнĕ вăтă суйлавçă Сергей Афанасьевич Ярлыкин юлташ чи малтан пырать, суйлав бюллетенĕсем илет. Вăл бюллетеньсене суйлав ещĕкне ярса çапла калать:

— Эпĕ комбинатра печник пулса ĕçлетĕп. Хама панă заданисене яланах ирттерсе тултаратăп. Манăн ĕçе ĕççыннисем яланах ырлаççĕ. Эпĕ вĕсем мĕтнине тивĕçтерме тăрăшатăп. Паян эпĕ, бюллетеньсене ещĕке ярса, телейлĕ кун-çулшăн, малашнехи ырлăхсемшĕн сасăлатăп.

Çамрăк суйлавçă Бургаев юлташ Советсене суйлама пĕрремĕш хут хутшăнчĕ. Вăл, çамах илсе, партипе правительствăна çамрăксене вĕренме çул панăшăн тав турĕ.

Суйлав участокне чечексемпе илемлетнĕ. Канмалли пӳлĕмре радиола вылять. Кунтах ача-пăча пӳлĕмĕ пур, унта кĕнекесемпе вылямалли тетесем тултарнă. Вырăнте буфет ĕçлет.

Сасăласси питĕ йĕркеллĕ пырать. Икĕ сехет хушшинче участокри суйлавçăсен çурри ярса сасăларĕ.

Кăнтăрла шкулти художествăллă пултарулăх кружокĕ «Тĕнчене—мир» темăпа литература монтажĕ ирттерчĕ, хĕлĕхлĕ инструментсен оркестрĕ концерт пачĕ.

Сĕтел-пукан тăвакан комбинатăн клубĕнче 26-мĕш суйлав участокĕ вырнаçнă.

Ку участокра чи малтан 76 çулхи Федор Степанович Борисов юлташ сасăланă. Вăл хăйĕн пурнăçĕнче сахал мар йывăрлăхсем тӳснĕ.

— Эпĕ 13 çулта чухне тăлăха юлнă,—тенĕ вăл сасăланă чухне.—16 çула çитсен, вăтă аннене тăрантарас тесе, производствăра ĕçлеме тытăнтăм. Малтан сторож пулса ĕçлерĕм. Ун чухне пирĕн пек çынсемшĕн урăх ĕç тупма май та çукчĕ. Совет влаçĕ мана пурнăç пачĕ. Эпĕ, сторожра ĕçленĕскер, чугун çул пăравусĕн машинисчĕ пулса ĕçлеме вĕрентĕм, чылай вăхăт хушши çак ĕçре ĕçлерĕм. Унтан 11 çул хушши сĕтел-пукан тăвакан комбинатра касакан инструментсен инструкторĕ пултăм. Халĕ эпĕ пенсие илсе тăратăп. Мана ватăлăхра çавăн пек пулăшу панăшăн пĕтĕм чун-чĕререн савăнатăп. Хамăр тăратнă кандидатсемшĕн сасăласа, эпĕ аслă Сталиншăн, коммунистсен партийĕн аслă политикишĕн, пĕтĕм тĕнчери лăпкă пурнăçшăн сасăлатăп.

5-мĕш цехри стахановец Василий Петрович Спирин юлташ рабочисем суйлав кунне пысăк хастарлăхпа кĕтсе илни çинчен каласа пачĕ. Вăл хăй икĕ çул хушшинче сакăр çуллăх нормине тултарнă.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(Хамăр корр.).

Савăнăçлă кун

КРАСНОАРМЕЙСКИ, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Ирхине пилĕк сехет. Тул çутăлса çитесси инçе-ха. Унта та кунта çынсем утни курăнать.

Красноармейски суйлав участокĕ. «Кăмăлласа кĕтетпĕр!» — тесе чĕнекен сăмахсем электричество çуттипе ялкăшса тăраççĕ. Çынсем пĕр-пĕрне суйлав кунĕ ячĕпе сывлăх сунаççĕ. Радио тăрăх Совет Союзĕн Гимнĕн кĕвви илтĕнет. Шăп 6 сехет. Суйлав участокĕн председателĕ М. Ильин суйлав пуçланни çинчен пĕлтерчĕ. Бюллетень илме Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници 62 çулхи Е. М. Петрова пырать. Вăл учитель пулса 39 çул ĕçлет.

— Хамăн ватăлăха пăхмасăр, ĕçлес те ĕçлес килет,—тет вăл.—Эпĕ пире савăнăçлă ĕçлеме майсем туса панăшăн Сталин юлташа тав тăватăп. Эпĕ унşăн сасăлатăп,—тет Е. М. Петрова юлташ.

Участокра 10 сехет тĕлне 753 çынран 615 çын сасăланă.

Итмар, Сунар, Васнар участокĕсенче 11 сехет тĕлне пĕтĕмпех сасăласа пĕтернĕ. Кăнтăрла иртсен 2 сехет тĕлне 27 участокран 10 участокра пĕтĕмпех сасăласа пĕтернĕ.

Суйлава ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. «Путь Ленина» колхоз çурăкине пур енĕпе те хатĕрленсе çитрĕ. Мартынкасси суйлав участокне кĕрекен суйлавçăсем кăçалхи ялхуçалăх налогне апане шучĕпе тӳлеме тытăнчĕç. Суйлав умĕнхи кун 1.500 тенкĕ укçа пухса панă.

«Урожай», «Сталинец», «Герой» колхозсем вăрман касса хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнă.

Ф. АНДРЕЕВ.

Çамрăк суйлавçă ĕмĕчĕсем

УЛАТĂР, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Улатăр хулинчи суйлавçăсем суйлав кунне пысăк çĕкленнĕрне кĕтсе илчĕç.

Суйлавçăсенчен нумайăшĕ ирхине 5 сехетрех тăрса суйлав участокĕсене пыма тытăнчĕç.

Вырăнти вăхăтпа 6 сехетре 5-мĕш суйлав участокĕнчи суйлав комиссийĕн председателĕ П. Н. Масленников юлташ суйлавçăсене хăйсен тивĕçне пурнăçлама чĕнчĕ. Ку вăхăт тĕлне участокра 100 суйлавçă ытла пухăннă. Чи малтан çамрăк суйлавçă, 6-мĕш вăтам шкулти 10-мĕш класра вĕренекен Л. Молодова сасăлать. Вăл, хытă хумханса, ...

янхи кун — манăн пурнăçри чи пысăк уяв. Эпĕ 10-мĕш класра вĕренетĕп. Вăтам шкула отличнопа пĕтерсе вĕренме пĕтерĕп тесе сăмах паратăп. Ун хыççăн аслă шкулта вĕренсе хамăр çĕршыври коммунизм строительствин активлă участникĕ пулăп.

Суйлавçăсем унăн сăмахне алă çупса кĕтсе илчĕç.

Малтанхи пĕр сехет хушшинче участокра 275 суйлавçă сасăларĕ. 3-мĕш суйлав участокĕнче те суйлавçăсем питĕ йĕркеллĕ иртрĕç. Кунта пĕр сехет хушшинче 300 суйлавçă ...

Кӗрешӳпе ӗçри хастарлӑх

Аслӑ Отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче лейтенант А. Ф. Доманин Волхов тата Ленинград фронтӗсенче салӑнӑ. Вӑл хӑйӗн командирӗ пулнӑ подразделенийӗн салтакӗсемпе хӗрӳ. Çавӑнпа та хӑюллӑх кӑтартнӑшӑн ăна Хӗрӳ Çӑлтӑр орденӗ, Александр Невский орденӗ, «Хӑюллӑхшӑн» тата «Ленинграда хӳтӗлесшӗн» медальсем парса награднланӑ.

Ленинград хулинчӗн пысӑ хӑйр çапӑçусенче лейтенант А. Доманин тӑвӑтӗ хуттӗн аманнӑ. Йывӑр аманнӑ офицера, сиввӗ уйӑх хушши госпитальре сывалнӑ хыççӑн, 1944 çулхи кӗркунне çапаса кӳçарса кила ярасçӗ. Вӑл Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденӗпе колхоза тавӑрӑнать.

Ку вӑхӑтра та фронтсенче хаяр çапӑçусем пынӑ-ха. Совет Çарӗ тӑшмана каялла хӑваласа, ăна арканса пынӑ. Тӑван çӗршыв патриочӗ, коммунист Доманин ялта пӗр кун та ӗçсӗр ларман, кире тавӑрăнсанах колхозра хӗрлӗлӗн ӗçлеме тытӑннӑ. Колхоз правленийӗ ăна юлса пыракан иккӗмӗш бригадӑн бригадирӗпе пулса ӗçлеме уйӑрса хартӑ.

Запасри офицер колхоз производствинче те фронтри пекех хастарӑ пулнӑ. Бригадӑна пӗлсе ертсе пырса тата ӗçре хӑй пӗрӗ тӗслӗх кӑтартса, вӑл бригада членӗсене хӑйсен коллективӗнӗн вӑйне шанса тӑма вӗрентнӗ. Çапла Доманин юлташ часах бригадӑна малти вырӑна кӑларнӑ.

Кольцовкӑри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз вӑрçӑнченех пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илнӗ. Колхозниксем вӑрçӑ вӑхӑтӗнче те хастарлӑ ӗçлесе фронта анатсимӗç нумай парса тӑнӑ. Анчах вӑрçӑ кунта та хӑйӗн йӗрне хăварнӑ, колхозра ун чухне тырпул тухăçлăх чылай чакнӑ. Малашне тырпул тухăçлăхне ӳстерме пысăк ӗçсем туса иртмелле, нумай вӑй хумалла пулнӑ. Доманин юлташ вара хӑй умне çакăн пек задача хартнӑ: тырпул тухăçлăхне вӑрçăнченхи шая ситермелле кăна мар, унтан та иртсе хăймалла; çанталăк условийӗсене пăхмасăр уй-хирӗн яланах пысăк тухăçлăх илмелле.

Доманин юлташ ун малтанах хăй мичуринла агробиологи наукин никӗçсене çине тӑрса вӗренӗ. Бригада членӗсене те агротехникăна тĕплĕн пăлланттарнă. Бригада малта пыракан агротехника праянвисене ӗçе кĕртсе пынă. Çавăн пек ӗçлени питĕнӳ тума май панă. Бригада тырпул тухăçлăхне çултан-çул ӳстерсе пынă, кĕтнĕрт 150 пăт е ытларах та тĕлтĕрлĕ туса илме тытăннă. Бригада 1947—1948 çулсенче пысăк тухăçлă ыран тата тулă туса илнĕшĕн Доманин юлташăн вăйăрăм çине боевой наградасăсене-знакпар икĕ Ĕçĕх Хĕрӳ Ялав орденĕ хуттăнăнă. 1949 çулта унăн бригади 56 гектар лаптăк çинче кашни гектарран 198-шар пăт ыран туса илнĕ. Çак чапăлă питĕнӳшĕн А. Ф. Доманина 1950 çулта правительство Социализмăлă Ĕç Геройĕн хисепĕ тата тата Ленин орденĕпе «Çурăпа Мăлатук» ылтăн медаль панă. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре çĕнĕрен çĕнĕ питĕнӳсем тунăшăн ăна 1951 çулта Ленин орденĕпе иккĕмĕш хут, 1952 çулта Ленин орденĕпе виççĕмĕш хут награднланă. Çапла вара вăйлă тырпул мастерĕ А. Доманин хăйĕн чапла ĕçĕсемшĕн пилĕк награда илнĕ.

Доманин юлташ ертсе пынă бригада иртнĕ 1952 çулта та пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ, хăшпĕр участокселенче тулă 250 пăт таран тухнă. Партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне партнă задачăсене ăнăçлă пурнăçлама мобилизланĕ. Фермăсене хăпе лайăх хатĕрленĕ, выльăхсем ăнă витесенче, тутă хĕл кăçăçĕ. 1952 çулта колхозра кашни ĕнерен 1.811 килограмм сĕт суса илнĕ пулсăн, кăçал кашни ĕнерен икĕ пиншер литртан кая мар сĕт суса илме задача хартнă. К. Ситухина, Н. Бурлакова тата Н. Кузина юлташсем хăйсене сирĕплетсе панă кашни ĕнерен 3.000 литр сĕт суса илме пултăç.

Доманин юлташ социализмăлă ăмăртăва анлăн сарса пырать. Фермăсенче ӗçлекенсем хăпе кашнисем пĕр-пĕринне ăмăртсе ӗçлеççĕ. Вĕсем ăмăртса ӗçлесе, республикăри чи лайăх выльăх-чĕрлĕх работникне ятне илессинчĕн кĕрешеççĕ.

Çакăн пек ĕçлет колхоз производствин пуçтарулăлă мастерĕсенчен пĕри—Александр Федорович Доманин.

Е. ВОЛКОВ,
Вăрнар районĕ.

Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ситĕнĕвĕ

ЧКАЛОВСКИ. «Восток» колхозăн фермăсенче ӗçлекенсем 1952 çулта пысăк ситĕнӳсем турĕç. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ӗçтехмелли плана ытлашшинех тултарнă, тухăçлăхне те чылай ӳстерĕç. Иртнĕ çулта кашни сăвакан ĕнерен планпа 1.200-шар литр сĕт суса илмелле пулнă пулсан, 1.298-шар литр суса илнĕ. Уйăрăм доярăксем тата хăйăрхăс ӗçлесе. Акă, П. Головина юлташ хăйне сирĕплетсе панă 6 ĕнерен кашниненех 1.371-шер литр, М. Спиридонова доярка 1.351-шер литр сĕт суса илнĕ. Вĕсем ĕнесене юратса пăхаççĕ, рацион-тăрăх тăрантараççĕ.

Сысна ферминчĕ ӗçлекенсем те пĕлтĕр паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Фермăра халĕ 366 сысна шутланать. 1952 çулта вăтам шутпа кашни сысна аминчен 16,7 çура илнĕ. Сысна пăхаканĕсем хушшинче хăйĕн пархатарлă ӗçĕпе Ф. Николаева коммунистка мала тухрĕ. Вăл фермăра 6 çул ӗçлет. Хăй пăхакан кашни ама сыснаран вăтам шутпа 21,3-шер çура илнĕ.

Ф. Николаева юлташ ялти общественăлă ӗçе те активлă хутшăнать. Ăна районти Совета депутатне суйланă.

Çак куншсенче колхозри выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ячĕпе ялан çырăнса тăракан Ф. Николаева юлташ ăнăçлă ӳстерӳçĕ. Вăл 1952 çулта 400 тенкĕлĕх çулăм-çăварăн облигацийĕсем илнĕ.

Ф. Николаева юлташ кашни сысна аминчен 23-шер çурăран кая мар илме пуçлĕ.

З. Шуçлина тата М. Ягудина юлташсем кашни 100 çурăхран 120 путтех илме тата вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерме çăмах парса пĕр-пĕрне социализмăлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Халĕ фермăсенче ӗçлекенсем хушшинче выльăхсене лайăх хĕл кăçарас тĕлĕпĕне ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Колхоз правленийĕне пуçламăш парторганизаци фермăсенче ӗçлекенсем валли лайăх условисем туса парассипе, тăрăшласçĕ. Кашни фермăрах хĕрлĕ кĕтессем тунă, вĕсенче, ялемăл литературa кĕнекисемсĕр пусне, выльăх-чĕрлĕх çинчен çырнă кĕнекесемпе журналсем, плакатсемпе лозунгсем пур. Ферма заведующийĕ П. Проф коммунист час-часах калаçусем ирттерет.

Ферма работникĕсем хăйсен пăхăнне зоотехника куровĕнче вĕренсе ӳстереççĕ.

Колхоз государствăна выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли плана сулсеренех вăхăтра тултаратъ. Вăл 1953 çулăмăн 60 центнер аш-какай, 12 пин литр сĕт, 6 пин çăмарта панă.

Партин XIX-мĕш съезчĕ ялхуçалăхĕ умне партнă задачăсене пурнăçласситĕн «Восток» колхоз членĕсем пĕтĕм вăя парса ӗçлеççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Выляв укçи

КАЛИНИНО. Районти перекет касси иртнĕ январь уйăхĕнче государство вассĕсем облигацийĕсем тăрăх 100 пин тенкĕ выляя укçи тӳленĕ. Икĕ сын 10-шар пин тенкĕ выляса илнĕ.

Ф. ОСИПОВ.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри стахановецсем

Ткачиха Ефросиния Егорова

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче çĕнĕ станоксем умĕнче Серафима Владимирова ӗçлет. Темиçе çул каялла вăл пир-авăр фабрикинче Ефросиния Егоровăна пĕрле ӗçленĕ. Егорова ăна, ялтан килнĕ чăваш хĕрачине, техникăна вĕрентнĕ.

— Ӗçлеме кăна мар, мана вăл пуçăма та вĕрентрĕ, — кăмăллăн аса илсе каласа парать Владимирова Ефросиния Егоровăна çинчен. — Ун аллисем — ылтăн алăсем.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Ефросиния Егоровна Егорова юлташ.

Владимирова сăмахĕсем Ефросиния Егоровна Егоровăн юлташăн пĕтĕм сăнарне уçса парассĕ. Вăл утă станокна пир тĕрме сахал мар хĕрсене вĕрентнĕ. Халĕ вĕсем çĕршыври тĕрлĕ фабрикăсенче ӗçлеççĕ.

... Шупашкарти пир-авăр фабрикинче кунĕн-çĕрĕн хăрушă мар, анчах ӗçе вĕрсе тăрать. Станоксем умĕнче вăтам кĕлеткелăх, хăюллă та ĕçре правур хĕр тăрать. Вăл—стахановка Егорова юлташ.

Сутă та асла цех. Кунта станоксене темиçе рет вырнаçтарса лартнă. Ыттисем хушшинче утă станок уйăрăмах палăрса тăраççĕ, вĕсем сменинех пĕр чăрăнмасăр ӗçлеççĕ, ăсăсем ӗçе курăнми хăнăрлăхпа калла-малла кусаççĕ. Егорова пĕр станок патĕнчен теприн патне пырса, пушшинĕ ăсăсене уллăтарса лартать.

Этем пурнăçĕнче уйăрăмах палăлă кунсем пулаççĕ. Ун пек ӗçра юлакан кунсем Егорова пурнăçĕнче те пулнă.

Иртнĕ çулхи июнь уйăхĕнче пир-авăр фабрикинчи коммунистсем пухăва пуçтарăнă. Пуху умĕнче тăракан самăрак хĕр коммунистсене хăйĕн пурнăçĕпе ăçĕсем çинчен каласа панă. Егорова юлташран унăн малашнинчи планĕсемпе ĕмĕтĕсем çинчен каласа лама ыйтнă.

— Парти ретне кĕрĕм май эпĕ пĕтĕм пуху умĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстерес нима, паха продукци ӗçе туса кăларăм, султалăкри нормăна срокчен тултарма сăмах паратăп,— тенĕ вăл.

Коммунистсен парти ретне кĕрсен Ефорова юлташăн ӗçлесе хастарлăхĕ тата ӳсĕ. Вăл пысăк пахалăхăпа продукци туса кăларакан бригадăна ертсе пыракан Александра Орешкинăна ăмăртăва чĕнĕ. Кун хыççăн вĕсем хушшинче ӗçлĕ тус-



килте те пăхăта ҫаклама пĕлет. Сменă пуçланиччен чылай малтан цеха пырса станоксем мĕнле ӗçленине пăха тухать. Вăрçă вăхăтĕнче мастер помощникĕ пулса ӗçленĕ май, станоксене пăха кĕркелесени çăлăнмĕ тĕлĕ. Ĕç вăхăтĕнче станок чăрăнсан, вăл механика е мастера чĕнсе вăхăта ирттермест, хăех тĕрлеть.

Ĕçре вăл ялаках правур. Ку вăл тĕкĕнчăкĕсене питĕрт кирлĕ. Çăн татăлнине станок чăрăнсан, савна Егорова çийĕнчех асăрхать, питĕ хăнăрт сăпса хурать. Нормировщикпе палăрнă тăрăх, çăх ăсăсене 1,8—2,1 секундра уллăтарать, татăлнă çине 0,25—0,33 секундра сыпать. Ку вăл ĕçе икĕ хута яхăн хăвăртрах тунине пĕлтерет.

Нумай чухне ткачихăсем станоксене ĕçе янă чухне ытлашши ҫукăнусем тăвассĕ. Егорова кунта та хăйне май анăçлесет тупнă. Вăл икĕ станока пĕр вăхăта тенĕ пекех ĕçлеттерме пуслать. Пирвайхи станокри ăсăна сыпăлăм аллине, иккĕмĕшне—сулхалăпине кăларса уллăтарать. Кайран уллăмĕне пилĕкмĕш станоксене туна ярать, юлашкинчен тин виççĕмĕшне тăвăтăмĕшне ĕçлеттерме пуслать. Çапла вара станоксене хута ярас вăхăта пĕр минута яхăн кĕскетет. Вăл ăсăсене вăхăтра уллăтарма ĕлкĕрет.

Темиçе çул каялла ткачихăсен сни татăлнине кунпа пăхса асăрхамалла пулнă, савна пула продукци пахалăхĕ чакнă. Юлашки çулсенче фабрикăра пур станоксем çине те приборсем лартнă. Сав приборсем ткачихăсен ĕçне чылаях çăмăллатаççĕ. Егорова юлташ 99,8 процент пĕрремĕш сорт пир-авăр тĕрсе кăларать. 1952 çулта вăл 400 тенкĕлĕх ытла сăн перекетленĕ.

Коммунист Егорова хăйĕн квалификацине, пĕлĕвне тăтăшах ӳстерме тăрăшать. Халĕ партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе вĕренет. Пленлă литература, кĕнекисене те юратса вулать. Юлашки вăхăтра вăл вунпаҫ кĕнеке вуланă.

— Пурнăçа тĕрĕс сутатса параканпроизводственнăй пурăнма тата ӗçлеме çав тери нумай пулăшаççĕ,— тет вăл тулли кăмăлпа. Хăйĕн самăрăсем тĕрĕс пулнине Ефросиния Егорова тĕслĕхсемпе кăтартса парать. Иртнĕ çулта вăл пысăк пахалăхлă продукци туса кăларнăшăн, ăмăртува мала тухнăшăн администрацине профсоюз комитечĕн хисеплă грамотине икĕ хуттăн илме тивĕçлĕ пулнă, темиçе хуттăн те ăна укçа парса премленĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„В. Урдаш „гастролĕсем“ фельетон пирки

1953 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ январĕн 14-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «В. Урдаш гастролĕсем» ятлă фельетона сӳтсе явнă. Ларура тухса калакансем фельетонра кăтартнă пур фактсем те тĕрĕс теçе ĕнлăнчĕç.

В. Урдаш совет писателĕсен Союзĕн членĕ те, канăнлăчĕ те мар, апла пулин те вăл, Шупашкарта чух та, районсене тухса çÿренĕ хушăра та «писатель» ячĕпе усă курса, чăн-чăн совет писателĕсен ятне ярса çÿрет. Ун пирки ăна писателĕсен Союзĕ пĕрре кăна мар асăрхаттарнă. Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ В. Урдаш çапла хăтланса çÿренине кирлĕ пек ĕçе тытмалть. В. Урдаш малашне литературăра ăнăçлă ĕçлесси вăл хăйĕн йăнăшăсене ăнланса илниччен, хăй чăнах та тÿрлĕнине ĕçне кăтартса панăччен килет.

В. АЛАГЕР,
Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ.

„Çăвар карса ларакансем“

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра февралĕн 11-мĕшĕнче «Çăвар карса ларакансем» ятлă фельетон пичетленнĕ тухнăччĕ. Етĕрне районĕн прокурорĕ фельетонра кăтартнисем тĕрĕс пулни, Ядрино япăнăвĕнчи склад заведующийĕ пулнă Строгинăна ăпăо правленийĕн председателĕ пулнă Иванова уголовнăй йĕркепе ответ тытăрмалла тунă çинчен пĕлтерĕç.

Общественăлă хуçалăха çирĕплетес ĕçре парторганизацисен ответлăхне ӳстерессишĕн

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ совет халăхне коммунизм тумалли асăпăран та аслă программăлă хĕçпăналлăнтарчĕ. Съезд решенийĕсемпе, Сталин юлташ съездра калана историлле сăмахпа тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлăлă проблемисем» ятлă ĕнтăлăçĕçĕпе халăхалла, совет çыннисем коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕм-тăвăçсĕ.

Ленин—Сталин партийĕ пире çитĕнӳсемпе яланлаха ларассинчен яланах асăрхаттарать. Умра тăракан çав тери пысăк ĕçсем пирĕн вăй-хăватпа пуçтарулăха вĕçĕ-хĕрринчĕ малалла ӳстерес пăлма хушăçĕ.

Кĕрешӳре пысăк çитĕнӳсем тăвас ĕçре масăçсене мобилизацилекен вăй — пуçламăш парторганизацисем. Вĕсен кĕрешӳри пуçтарулăхĕ вăйлă çĕрте яланах пысăк ӳсĕмсем пулаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ парти райкомĕсен, хуçалăхăл-политинăлă ĕçсене ăнăçлăрах туса пыма май пуçтăр тесе, пуçламăш парторганизацисем çине тăнлса тăма ӗçлемелле.

Пирĕн район иртнĕ çулта государствăна тырă памалли плана тата 1952—1953-мĕш çулсенче государство валли вăрман хатĕрлесе памалли задание срокчен тултарчĕ. Çак ӳсĕмсене əпир колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен мобилизацилекен рольне, вĕсен кĕрешӳри пуçтарулăхне тата общественăлă хуçалăха тĕрлелетес ĕçре коммунистсенчен ответлăхне тăтăшах ӳстерес пăхăнмине кăна тума пуçтарăмăр.

Парти райкомĕ общественăлă хуçалăха çирĕплетессишĕн пыракан кĕрешӳре пуçарса тата ертсе пырас тĕлĕпĕне сахал мар опыт тупнăç. Çапăçусене вăй тĕлĕпĕне колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен ĕçĕнчен те примерсем илсе кăтартма пуçтаратăпăр.

Сăмахран, «Красный флот» колхозăн пуçламăш парторганизацине илер. Парторганизаци хăйĕн партилĕ-политикăлă тата организацилĕ ĕçĕсене пуринчен малтан артелĕн общественăлă хуçалăхне тĕрлелетес задачăна пăхăнтарса туса пынăçемпе, коммунистсен общество интересĕсемшĕн вăтăрах тăрăшас тӳлăмне тăтăшах ӳстерет.

Бунти пуçламăш парторганизаци тата унăн кашни членĕ общественăлă хуçалăхшăн кĕрешинн результатчĕ халĕ уçăнах курăнать. Артелĕн пĕрлехи тулăмĕ сулсеренех нумайланса пырать. Парторганизаци кăтартăвĕсене шута илнĕ май, кунти колхозниксем артель укçи-тенкине пуринчен малтан хуçалăха сирĕплетес ĕçе яна кăмăл тăваççĕ. Кунта сулсеренех хуçалăха янăлă суртсем ӗçе-ӗçе лараççĕ, артелĕн тырпул тухăçлăхне ӳстерес пăхăнмине пырасçĕ. Колхозăн пайланман тата ытти фончĕсем пĕрмаях пысăкланса пырасçĕ. Артель сулсеренех вăйлă тырпул туса илекен пулчĕ, общественăлă выльăх-чĕрлĕх ӗçтехмелли, выльăх-чĕрлĕхçен продуктсем илмелли плана тăтăшах иртнĕре тултарать. Колхозниксем кăнăн сулах ӗçкунсем тăрăх тулăмĕ нумай илеççĕ.

Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем общественăлă хуçалăха çирĕплетес ĕçе юлашки вăхăтра уйăрăмах тинкăмлĕ пăхма пуçларĕç. Чылай парторганизацисем артель хуçалăхне вăйлатас ыйтусене парти пухăвĕсенче тĕрĕш сӳтсе явасçĕ, ку тĕлĕпĕне конкрет решенисем ăшшăнтасçĕ, хăйсен ăшшăнăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн ирми-канми кĕрешеççĕ.

Çак енĕпе Сталин ячĕпе тăракан колхозăн пуçламăш парторганизацин лайăх тĕслĕх кăтартать. Колхозăн коммунистсенчен чылаййĕ ответлă участокселе ертсе пырасçĕ, производствăра ӳсĕмсем тума ытти колхозниксене хавхалантарасçĕ.

Пуçламăш парторганизаци колхозра общественăлă выльăх-чĕрлĕх ӗçлекенсем валли ăшă кăмăллă сулсеренех вăйлатас ӗçе тытать. Иртнĕ çулта колхоз выльăх-чĕрлĕх фермисенче асăлларма общественăлă çуртсем пуçмăй хатĕрĕç. Колхозра 33 сынтан ятарласа строительство бригали организациленĕ. Парторганизаци сменине бригадăна ертсе пыма Антонов коммуниста уйăрнă. Правленин ĕçне тĕрĕслеппине пĕрлех, парторганизаци Антонов юлташăн ĕçĕне тăтăшах интересленет, ăна кирлĕ тапăр пулăшу парать. Ответлăха ялаках асра тытакан коммунист ĕçре лайăх сĕртĕнсе турĕ. Унăн бригали иртнĕ çулта 91 ĕне валли тишкăвăт пĕтĕ, 109 сысна валли вите, 30 пăру валли вите туса лартрĕ.

Колхозри коммунистсем кунта лайăнмарĕç, общественăлă çурт-йĕрсен строительствине малалла вăйлатмалли майсене тĕрлесе вĕренчĕç. Парторганизаци сĕнне хыççăн, правлени çак ыйтăва колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче лартрĕ. Колхозниксем парторганизацин хавхалăçăпăлăнса ăшшăнчĕç. Артель членĕсен пĕрлехи пухăвĕ 1953 çулта выльăх-чĕрлĕх валли витесем тата ытти тĕрлĕ общественăлă çуртсем лартас тĕлĕпĕне социализмăлă обязательствăсем ячĕ. Колхозниксем общественăлă строительство валли çак хăйте материал хатĕрлеме, вăл шутран 350 кубометр йывăç февраль иртичченех турттарса ӳма ăшшăнчĕç.

Пĕрлехи пуху йăшшăнă тăрăх, 1953 çулта кайăк-кĕшĕк вити, путенсем ураламалли вите лартмалла. Унсăр пуçне, кирпĕчен силос шăтăкĕ туса хатĕрлемелле, икĕ кормокухня, ялхуçалăх машинисемне ытти инвентаре тытмалли сарай, выльăх-чĕрлĕх пăхăнăçлăн валли общежитки, сĕрудăмпа хранилищи тата зерносушилка тума палăртнă. Мĕнпур строительство ĕçĕсене 1953 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлĕне пурнăçламалла.

Паллах ăнтă, кун пек пысăк ĕçсем çăмăллăн тапранса каяс сук. Пуçламăш парторганизацине колхоз правленийĕ колхозниксен йышăннине сиплĕнех практикăлă ĕçсемпе сыхăнтарма пултăрĕç. Колхоз паянхи куна 200 кубометр ытла йывăç хатĕрленĕ.

Вăрман хатĕрлесе турттарса кăлармалли плана срокчен тултарнă май, пирĕн районти колхозсенче чылай ĕç вăйĕ пуçланчĕ. Райком колхозсене строительство ĕçне вăйлатма палăртрĕ. Райком бюрочĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем общественăлă строительство тĕлĕпĕне йышăннă обязательствăсене ырларĕ, ку тĕлĕпĕне ытти колхозсенчи парторганизацисене те тимлĕрех ĕçлеме кăтарту панă. Çапла вара ытти нумай колхозсенчи парторганизацисем те строительство валли материалсем хатĕрлес ĕçе пуçарса ячĕç. Пĕтĕмпĕнне илсен, район ял тĕлĕпĕне малтанхи ӳсĕмсене турĕ ăнтă. Районти парторганизацине колхозсенчи мĕнпур коммунистсен çак ĕçри ответлăхне ӳстерни выльăх-чĕрлĕх ӗçтехмелли общественăлă хуçалăха çирĕплетме май парать.

Асăннă тĕслĕхсемпе пĕрлех, общественăлă хуçалăха çирĕплетес тĕлĕпĕне «Красный волгарь», «Большевик», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенчи пуçламăш парторганизацисен хăйсен пуçарăлăпа ăшшăнăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн ирми-канми кĕрешеççĕ. Çапăçусене тĕлĕнех «Красный волгарь», «Большевик», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем парторганизацисен хăйсен пуçарăлăпе лайăх кăтартăçĕ. Вĕсем правленисен ĕçĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăраççĕ, коммунистсен ĕçри ответлăхне ӳстерес пырса, колхозниксен массисене ялхуçалăх артелĕн Уставне тĕрĕс пурнăçлассишĕн тимлĕн кĕрешме воспитанин парассĕç.

Мĕнпур колхозниксене, партине совет активне колхозсен общественăлă хуçалăхне тĕрлелетес ĕçре ответлăха тулĕç тăма вĕрентес ӗнтĕресси—пирĕн тивĕç. Çак тивĕçе пурнăçласа пырас пулсан, пирĕнчен малтан кадресен ĕçĕпе пахалăхне, политикăлăлă тăвăракурăмĕне произ-водствăлă пĕлĕвне ӳстерес пыми кирлĕ. Ку тĕлĕпĕне əпир чылай кадресене агрономие зоотехника тата ветеринари курсесене вĕрентмелли виçĕ сулăлăх курсесене хуттăн ӳстерме тăрăшăнăпăр. Районĕне илсен, агротехника курсĕсенче 354 çын тата зооветеринари вĕрентмелли курсесене 365 çын вĕренет. Вĕсенчен нумайăшĕ — коммунистсемпе колхозсенчи ертсе пыракан кадресем. Колхоз кадресен курсĕсем хăйсен ĕçĕсене лайăхлатсах пырасçĕ. «Красный волгарь», «Память Кирова», Крупская ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисем вĕренӳ ĕçне йĕркелес тĕлĕпĕне уйăрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартасçĕ.

Курсесене вĕренекен юлташсен творчествăлăх пултарулăхĕ ӳсе пыни палăрма пуçларĕ. Сăмахран, Молотов ячĕпе тăракан колхозăн уй-хирĕ бригалин бригадирĕ Кириллов юлтан, агрокурсра вĕренекенскер, бригада ĕçне пултарулăхăн ертсе пыракан пулчĕ. Çак бригадă иртнĕ çулта палăрмалла ӳсĕмсем турĕ. Бригада членĕсем 12 гектар çинче кашни гектар пуçне 30-шар центнер ыран туса илчĕç. Ефремов юлтан ертсе пыракан бригада кашни гектартан 22-шер центнер пăру пуçтарса кĕртрĕ. Кун пек тĕслĕхсем районĕпе сахал мар илсе кăтартма пулать.

Анчах колхозсене организацине ҫуса-лăх тĕлĕпĕнчен тĕрĕслетес пырас, общественăлă хуçалăха çирĕплетес ĕçре пирĕн ветеринарсем сахал тупăк мар-ха. Хăйпĕр колхозсенче пуçламăш парторганизацисем пăхăнăçлă ӳтпа та ĕçĕпе маттисем хушшинче воспитани ĕçе çитĕлĕкле тăраççĕ.

Акă, Пушкăн ячĕпе тăракан колхоза илер. Артель тырпул тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарăнăçлă. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ те çитĕлĕкçĕ, Правленин общественăлă выльăх-чĕрлĕх ӗçтехмелли плана тăтăшах ӳстерсе пырать. Ăна тивĕçлĕ пулăшу парать. Ветеринари пункчĕ ĕçĕ-хĕлĕ çăмăллатаççĕ. Егорова юлташ 99,8 процент пĕрремĕш сорт пир-авăр тĕрсе кăларать. 1952 çулта вăл 400 тенкĕлĕх ытла сăн перекетленĕ.

Коммунист Егорова хăйĕн квалификацине, пĕлĕвне тăтăшах ӳстерме тăрăшать. Халĕ партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе вĕренет. Пленлă литература, кĕнекисене те юратса вулать. Юлашки вăхăтра вăл вунпаҫ кĕнеке вуланă.

— Пурнăçа тĕрĕс сутатса параканпроизводственнăй пурăнма тата ӗçлеме çав тери нумай пулăшаççĕ,— тет вăл тулли кăмăлпа. Хăйĕн самăрăсем тĕрĕс пулнине Ефросиния Егорова тĕслĕхсемпе кăтартса парать. Иртнĕ çулта вăл пысăк пахалăхлă продукци туса кăларнăшăн, ăмăртува мала тухнăшăн администрацине профсоюз комитечĕн хисеплă грамотине икĕ хуттăн илме тивĕçлĕ пулнă, темиçе хуттăн те ăна укçа парса премленĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Перекет кассин ĕçне вăйлатмалли

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезĕнче А. Микоян юлташ сапла каларĕ: «Халăхăн пурнăçĕ лайăхланса пынине тата совет укçине пысăк хака хунине кăтартакан тепĕр показатель вăл—халăх перекет кассине хывакан укçа-тенкĕ хисепĕ 1952 çулта, 1940 çултине таш-латтарсан, 4 хут ӳсни пулса тăрать. Сакă вăл совет халăхăн материаллăлăх пурнăçĕ лайăхланса пынине пуссăн кăтартса парать».

Халăх пурнăçĕ лайăхланса пынине эпир хамăр районти перекет кассине ĕçĕнче аван куратпăр.

Перекет кассине хывнă укçа-тенкĕ 1952 çулта, 1948 çултине таплаштарсан, виçĕ хут ытла, 1951 çултине таш-латтарсан икĕ хута яхăн ӳснĕ. Вкладчиксен хисепĕ те хушăнсах пырать.

Колхозсенче тупăша ĕçкүнсем тăрăх валеçлă хисĕпăн е рабочисемпе служащисем уйăрăн ĕç укçине илнĕ хыçăн, перекет кассинче вунпаҫ, сĕрмĕр пин тенкĕ укçа хушăнать, вкладниксем йышăнă те ӳсет.

Перекет касси-кĕнеки çине пăхсан цифрăсем çеç куратăн. Анчах çак цифрăсем колхозниксемпе колхозсен тупăнмĕ ӳсĕ пынине, рабочисемпе служащисен пурнăçĕ лайăхланса пынине уссăн кăтартаççĕ.

Перекет кассине укçа хунипе пĕрлех, ăна калăла илсе расходлани те пире интереслентерет.

Районти перекет кассинче укçа пухса, 36 вкладчик хăйсене валли çĕнĕ пĕтĕм лаптăк, сĕрмĕр çын çĕнĕ çĕлемелли машинăсем, мотоциклетсем, велосипедсем, куйпĕсем тунăччĕ.

Пĕр юлтан пĕчĕккĕн укçа пухнипех кăнтăрти курортсене икĕ хуттăн кайса сывлăкне сирĕплетсе килчĕ. Сакăн пек тĕслĕхсем татах та пулмай.

Пирĕн перекет касси вкладчикĕсемпе ĕçленипе пĕрлех, ваом тытăкансем хушшинче ĕçлесе тăракан ĕçтешсене те пысăк вырăна кăларать. Районти колхозниксемпе служащисен государство заемĕсене сулсеренех пит-тĕ пысăк хавасăлăхпа кĕтсе илеççĕ.

Заем облигацийĕсене тытăкансене 1948 çулта выляксем тăрăх 150 пин тенкĕ, 1952 çулта 355 пин тенкĕ, 1953 çул пуçланăнранпа та чылай çынсем тӳленĕ. Заем облигацийĕсемпе выляса илекенсем хушшинче 5, 10, 25 пин тенкĕ выляса илнисем те сахал мар.

Тойăмлĕ ял Советĕнчи А. колхозник государство заемĕпе 25 пин тенкĕ выляса илнĕ, вăл çĕнĕ пӳрт лартрĕ, радиопринемник çĕнчĕ.

Пĕр перекет касси-ĕçне малашне тата та лайăхлатса пыма тăрăшатпăр.

Е. ВАСИЛЬЕВ,
перекет кассин заведующийĕ.
Муркаш.

Совет Çарĕ 35 çул тултарнине урăх çĕршывсенче уявлани

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИ

БЕРЛИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикин халăхĕ Совет Çарĕ 35 çул тултарнине анлă палăртать.

Берлинри демократиллĕ хаçатсем çак уяв пирки умстатьясем тата ятарласа хатĕрленĕ материалсем пичетлесе кăларнă, вĕсенче Совет Çарĕн мухтавлă ĕçĕсемпе çĕнтерĕвĕсем çинчен каланă.

Хаçатсем малтанхи страницăсенче Демократиллĕ Германи Республикин президенчĕ Вильгельм Пик, премьер-министр Отто Гротеволь, Халăх палатин председателĕ И. Дикман, Германирн социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ Германири Совет Контроль Комиссийĕн председателĕ арми генералĕ В. И. Чуйков патне янă саламсене пичетлесе кăларнă.

Хаçатсенче çавăн пекех нумай фотоÿкерчĕксем пичетленĕ, вĕсем Совет Çарĕн воинĕсен Аслă Отечественнăй вăрçă кунĕсенчи тата мирлĕ ĕçĕсенчи лару-тăрури боевой пурнăçне кăтартса парассĕ.

«Нейес Дейчланд» хаçат умстатьяра, ĕлмахран, çапла çырать: «Совет Çарĕ — чăннипех халăх çарĕ. Халăх службинче тăрса, унăн интересĕсене хÿтĕлесе, вăл халăхпа пĕрле тачă пĕтĕçсе тăрать. Халăх çарĕ пулнă май вăл пĕр тĕллев кăна тытать, унăн тĕллевĕ — халăхăн мирлĕ пурнăçне хÿтĕлесси пулать».

Хаçат Совет Çарĕн воинĕсен морallĕ-политикăллă шайĕ пысăк пулнине палăртать. Совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕсем Ленинпа Сталин вĕсене халăх ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăма тата социализмлă Тăван çĕршыва юратма, мирĕн таса ĕçне вăрçă чĕртекен агрессорсен ирсĕр ĕçĕнчен хÿтĕлеме вĕрентсе воспитани парса çитĕнтернĕ.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ КОРЕЯ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин халăхĕ хăйне ирĕке кăларнă Совет Çарĕ 35 çул тултарнине савăнăçлăн палăртать. Предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче, Корея Халăх çарĕн чаçĕсенче Совет Çарĕн кунĕ ячĕпе савăнăçлă пухусем пулса иртеççĕ. Паян Пхеньянра Совет Çарĕ кунĕ ячĕпе савăнăçлă лару пулса иртнĕ. Ăна ССР Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан Корея обществин Центральнăй правленийĕ организациленĕ. Савăнăçлă ларăвăн президиумĕнче — Корейăри Ĕçлĕх партийĕпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствин руководителĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн Посолĕ, Китай Халăх Республикин Поверенннăйĕ, халăх демократи çĕршывĕсен дипломатиллĕ миссийĕсен пуçлăхĕсем. Залра Пхеньян общественноçĕ, представителĕсем, хресченсем, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин геройĕсем, ĕç геройĕсем пулнă. Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 35 çул тултарни çинчен Корея Халăх çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ генерал-полковник Нам Ир доклад тунă.

Савăнăçлă ларура пулнисем пысăк çĕкленÿпе Генералиссимус И. В. Сталин патне саламлă телеграмма яма йышăннă.

Республикăри хуласемпе уезд центрĕсенче ССР Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан Корея обществин уйрăмĕсем «Совет Çарĕ — пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхăн тĕрекĕ», «Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Аслă Отечественнăй вăрçăра» тата ытти темăсем тăрăх куçса çÿрекен фотовыставкăсем организациленĕ. Республикăра «Берлин парăнни», «Сталинградская битва», «Третий удар», «Великий перелом» кинокартинăсене пичĕ юратса пăхаççĕ.

АЛБАНИ

ТИРАНА, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири ĕçсыннисем Совет Çарĕ 35 çул тултарнине пысăк уяв вырăнне хурса паллă тăваççĕ. Паян тухнă хаçатсем малтанхи страницăсенче Генералиссимус И. В. Сталин юлташăн пысăк портречĕсене пичетлесе кăларнă.

«Зери и популлит» хаçат умстатьяра çапла çырать:

Ленинпа Сталин туса хунă Совет Çарĕ вăл — çĕнĕ сăнарлă çар, халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлекен çар. Унăн историйĕ Совет государствин мухтавлă историйĕпе, ăна туса хунă аслă Сталин, аслă полководец ячĕпе уйрăлми таччăн çыхăнса тăрать.

Совет Çарĕ—никам çĕнтереймй çар, СССР халăхĕсен мирлĕ ĕçĕн шанчăклă тĕрекĕ, пĕтĕм тĕнчере мир туса хурас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан çар.

БОЛГАРИ

СОФИЯ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Софире Болгари Халăх çарĕн Центральнăй çуртĕнче Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа савăнăçлă пуху пулнă. «Сталин! Сталин!» тесе савăнăçлăн кăшкăрса тата тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Центральнăй Комитетне тата Болгарири Коммунистсен партийĕн Вылко Червенков ертсе пыракан Центральнăй Комитетне суйланă.

Президиумра Болгари Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ генерал-полковник Иван Михайлов, халăх оборона министрĕ генерал-полковник Петр Панчевский, Болгари Халăх çарĕн генералĕсемпе офицерĕсем вырăн йышăнаççĕ.

Совет Çарĕ 35 çул тултарни çинчен генерал-майор Владимир Танов доклад тунă. Хăйĕн докладĕнче вăл çапла каланă: мухтавлă Совет Çарĕ 35 çул тултарнине Совет Союзĕпе унăн паттăр воинĕсем кăна мар, Болгари халăхĕпе унăн воинĕсем кăна мар, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă çынсем паллă тăваççĕ.

Совет Çарĕн кун-çулĕ, тенĕ докладчик, вăл пролетариллĕ интернационализма, социализмпа коммунизм ĕçне вĕçĕмсĕр парăнса тăнине кăтартакан кун-çул пулса тăрать.

Пухура пулнисем пысăк çĕкленÿпе Совет Çарĕн хăватлă çĕнтерĕвĕсене хавхалантарса пыракан аслă çулпуç патне, Генералиссимус Сталин патне саламлă телеграмма яма йышăннă.

ДАНИ

КОПЕНГАГЕН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Копенгагенра Данипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăну енĕпе ĕçлекен Данири общество Совет Çарĕ 35 çул тултарнă ятпа пуху иртгернĕ. Зала Дани тата Совет Союзĕн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Пухура Совет Союзĕн миссийĕнче ĕçлекенсем, Китай Халăх Республикин тата халăх демократи çĕршывĕсен миссийĕсен представителĕсем пулнă.

Данипе Совет Союзĕ хушшинчи çыхăну енĕпе ĕçлекен Данири обществăн председателĕ профессор Иорген Иоргенсен «Мĕншĕн эпир Совет Çарне саламлатпăр» темăпа доклад тунă. Вăл каланисене пухура пулнисем ăшшăн йышăнса илнĕ.

Совет Союзĕ пулман пулсан, тенĕ Иоргенсен, Европа паян Гитлер ури айĕнче пулнă пулĕччĕ, Дани вара телейсĕр те мĕскĕн çĕршыв пулнă пулĕччĕ.

Эпир, мирлĕ пурнăçа юратакан Дани çыннисем, тенĕ юлашкинчен докладчик, Совет Çарне, нихçан та агрессиллĕ вăрçă вăрçман çара, мирпе прогресс тĕрекĕ пулса тăракан çара саламлатпăр.

Кун хыççăн пухура пулнисем совет кинофильмне курнă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ февралĕн 21-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем пур фронтсенче те Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Ĕнер çĕрле Америкăн «В-29» йышши 17 бомбардировщикĕ Пхеньян хулин сурçĕр пайĕ çине бомбăсем пăрахнă. Хулари халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, чылай çуртсемпе землянкăсене ишĕлтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем малтанхи вырăнсенчех Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ.

Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине тискеррĕн тапăнать

ПХЕНЬЯН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Корейăри мирлĕ хуласемпе ялсем çине çаплах бомбăсем пăрахать. Ĕнер кăнтăрла Америка самолечĕсем Кăнтăр Пхенан провинцийĕнчи Тэдон тата Кансо уезчĕсенчи ялсемпе çулсем çине темиçе хутчен тапăннă. Çуртсем нумай ишĕлнĕ, мирлĕ халăх хушшинче вилнисем тата аманнисем нумай.

Паян каçхине Америкăн йывăр бомбардировщикĕсем Пхеньян хулинчи халăх пурăнакан кварталсем çине тата хула çывăхĕнчи шкулсемпе больницăсем çине тискеррĕн тапăннă. Вуншар çуртсене вут хыпса илнĕ, пĕр пуçламăш шкул, медицина пункчĕ çунса кайнă, хĕрарăмсемпе ачасем хушшинче вилнисемпе аманнисем 40 çын ытла.

Çакăн хыççăн «вĕçекен крепоçсем» Кăнтăр Пхенан провинцийĕнче Тэдон уездĕнчи Енгунри ялĕ районĕнче Корейăри Хĕрлĕ Хĕрес госпиталĕ вырнаçнă вырăна 300 ытла бомба пăрахнă. Больница çурчĕсене пурне те çĕмĕрсе тăкнă, напалм пăрахса çунтарса янă, аманнă çынсем нумай пĕтнĕ, 2 врач вилнĕ, 7 врач тата санитар йывăр аманнă. Енгунри ялĕнче шкул çуртне тата хресченсен темиçе килне ишĕлтернĕ, 15 хĕрарăм тата ача вилнĕ е аманнă. Тэдон уездĕнчи Чхонгери ялĕ çине те бомбăсем нумай пăрахнă. Енгунри ялĕнчи госпиталь çине юлашки 8 уйăх хушшинче американецсем 3 хутчен бомбăсем пăрахнă.

Паян ирхине Америкăн реактивлă самолечĕсем каллех Пхеньян çывăхĕнчи Нампхо районĕнчи ялсем çине тапăннă.

ТУРЦИ АРАБ ÇĔРШЫВĔСЕНЕ АГРЕССИЛЛĔ ÇЫВĂХ ХĔВЕЛТУХĂÇ БЛОКНЕ КĔРТМЕ ТĂРĂШАТЬ

БЕЙРУТ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем тата радио пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Турци араб çĕршывĕсемпе «питĕ интересленме» пуçланă, вăл вĕсене агрессиллĕ Çывăх Хĕвелтухăç блокне кĕртме тăрăшать.

Сирире тухса тăракан «Аль-Файха» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Турци араб çĕршывĕсемпе «çывхарас» тесе пысăк вăй хурса ĕçлет. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çывăх вăхăтра Турци ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кĕпрюлю Сирие, ун хыççăн ытти араб çĕршывĕсене кайса килме шутлать.

Ливанра тухакан «Аль-Джарида» хаçат, хăйĕн корреспонденчĕ Дамаскран пĕлтерни çинчен каласа, çак пĕлтерĕве çирĕплетет, хăй енчен тата çапла хушса çырать: Кĕпрюлю араб çĕршывĕсенче пулнисĕр пуçне тата Пакистанпа Индире те пулма шутлать. Хаçат кăтартса панă тăрăх, Кĕпрюлю çак çĕршывсен руководителĕсемпе пĕрле, Турци хутшăннипе, араб çĕршывĕсемпе хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсем хутшăннипе «пĕрлехи командовани» тăвасси çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явма шутлать. Çак «командовани», тесе çырать хаçат, хĕвеланăçри державăсен Вăтам Хĕвелтухăçĕнче хĕçпăшаллă системăсем тума палăртакан планĕсемпе килĕшсе тăрать.

Бейрутри радио араб çĕршывĕсен информаци агентствинчен илсе пĕлтернĕ хыпар тăрăх, хальхи вăхăтра Анкарăна пынă Ливан журналисчĕпе калаçнă чухне, Кĕпрюлю «США, Англи, Франци пулăшнипе араб çĕршывĕсемпе Турцие вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен пĕрлешме» чĕннĕ.

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче

БУХАРЕСТ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Паян 18-мĕш вăйă пулнă. 18-мĕш вăйă хыççăн мастер Толуш малта пырать, вăл 17 очко выляса илме май пур çĕртен 13 очко илнĕ. Смыслов—иккĕмĕш вырăнта, вăл 18 очко выляса илме май пур çĕртен 12 очко илнĕ. Петросян—16 очко выляса илме май пур çĕртен 11 очко, Болеславский—17 очко выляса илме май пур çĕртен 11 очко илнĕ.

Монголи халăхĕ Сухэ-Батора хисеплесе асăнать

УЛАН-БАТОР, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Монголи халăхĕ Монголири революциллĕ халăх партийĕн тата демократиллĕ халăх государствин никĕсне хывнă Сухэ-Батор вилнĕренпе 30 çул тултарнине анлă палăртать. Паян Сухэ-Батор вилтăпри патне Монголи столицинчи ĕçсыннисем тата выльăх ĕрчетекен аратсем вĕçĕ-хĕррисĕр пырса тăнă. Вилтăпри çине чечек кăшăлĕсем нумай хунă.

Рабочисен, аратсен тата интеллигенцин çĕршер представителĕсем Сухэ-Батор çурт-музейне пырса курнă. Вĕсем Монголи халăхĕн çулпуçĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен калакан экспонатсене интересленсе пăхнă.

Каçхине музыкăпа драма театрĕн çуртĕнче Монголири революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Улан-Батор хула комитечĕн, Аслă Халăх Хурал Президиумĕн тата Министрсен Совечĕн, партипе обществăллă организацисен тата Монголи çарĕн представителĕсемпе пĕрле, Сухэ-Батор вилнĕренпе 30 çул тултарнă ятпа хурлăхлă-чаплă лару пулса иртнĕ.

Хурлăхлă-чаплă ларура пулнисем И. В. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

КИТАЙРА МАШИНА-ТРАКТОР СТАНЦИЙĔСЕМ НУМАЙЛАНАÇÇĔ

ПЕКИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет: Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра ĕçлесе тăракан машина-трактор станцийĕсемсĕр пуçне, кăçал çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче тата 10 машина-трактор станци тăваççĕ.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсем енĕпе иртнĕ çулта пулса иртнĕ Пĕтĕм Китайри конференци йышăннă тăрăх, механиксемпе трактористсем хатĕрлеме пĕр уйăхлăха курссем организациленĕ. Нумаях пулмасть çак курссенчен 134 механик тата тракторист вĕренсе тухнă. Вĕсем машина-трактор станцисем тунă çĕре хутшăнма хăйсем ĕçлекен çĕнĕ вырăнсене тухса кайнă.

СĂТАРÇĂСЕНЕ СУД ТУНИ

БЕРЛИН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 20-мĕшĕнче Вартенбергра (Бранденбург округĕ) кулаксемпе вĕсен майлисен ушкăнне суд тума тытăннă. Айăпланакансем: Гельмут Бетхер, Фриц Арендт, Франц Барковский, Эльза Бĕтхер тата Герда Арендт. Вĕсене фашистла пропаганда сарнăшăн, саботаж тунăшăн, республика хуçалăхне хирĕç пыракан айăплă ĕçсем тунăшăн айăплаççĕ.

Америка агрессорĕсем çаплах бактериллĕ хĕçпăшалпа усă кураççĕ

Синьхуа агентстви пĕлтерни

ПЕКИН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Мукденран çапла пĕлтернĕ:

Америка сывлăш-çар вăйĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорине вĕçсе кĕрсе тата бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем пăрахса çаплах хăйсен тискер ĕçне тăваççĕ.

1952 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче 11 сехет те 00 минутра тăшманăн 3 самолечĕ Беньси уезчĕ çийĕпе вĕçсе иртнĕ. Вĕсем симĕс çулçăсем пăрахса хăварнă.

1952 çулхи октябрĕн 28-мĕшĕнче тăшман самолечĕсем Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китай территорине вĕçсе кĕнĕ, вĕсем пысăк çĕр лаптăкĕ çине бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем пăрахса хăварнă. Çак самолетсем Ляоси провинцийĕнчи Цзинь, Бэйчжэнь, Паньшань, Тайань, Хэйшань уезчĕсен çийĕпе вĕçсе иртнĕ. Вĕсем эрешменсем нумай пăрахса хăварнă. Çак эрешменсене самолетсем вĕçсе кайнă хыççăн 10 е 20 минутран тупнă. Асăннă эрешменсем çулсем çинче, уйсенче, йывăçсем çинче, çуртсем çинче, телеграф юписем çинче çÿренĕ.

Бэйчжэнь уездĕнче пухнă эрешменсене Китайри паллă бактериологсем тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, вĕсене пурне те дизентери тата çĕпĕр чирĕн бациллисем ерни палăрнă.

1952 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче 11 сехет те 00 минутра тăшман самолечĕ Ляоси провинцийĕнчи Лишу уезчĕ тĕлĕнчен вĕçсе иртнĕ, вăл унта эрешменсем нумай пăрахса хăварнă.

1952 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче 5 сехет те 00 минутра тăшман самолечĕсем Ляодун провинцийĕнчи Йоуянь уезчĕ тĕлĕнчен вĕçсе иртнĕ, вĕсем шăнса ларнă çырмасем çине эрешменсем, нăрăсем тата ытти хурт-кăпшанкăсем нумай пăрахса хăварнă.

Çÿлте асăннă хурт-кăпшанкăсене пурне те тата тăшман самолечĕсем çинчен пăрахса хăварнă ытти япаласене вырăнти халăхсем тата эпидемие хирĕç кĕрешекен отрядсем çийĕнчех пĕтернĕ.

Иранра çамрăксене арестленĕ

ТЕГЕРАН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Колониллĕ чуралăх йĕркине хирĕç кĕрешмелли куна иртгернĕ май, ĕнер Тегеранри университетра тата хулари ытти районсенче, çавăн пекех чылай кинотеатрсенче демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрацисене пуринчен ытла студентсемпе вĕренекен çамрăксем хутшăннă. Кĕске вăхăтлăх митингсем пулса иртнĕ. Листовкăсем салатнă. Листовка авторĕсем Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнче йăва çавăрнă Америкăпа Англи империализмне хирĕç кĕрешме чĕннĕ, çавăн пекех Америкăн çар советникĕсемпе ытти çавнашкал советниксене Иранран хăваласа кăларма, Трумэн программин 4-мĕш пунктне пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен Америка администрацине пĕтерме чĕннĕ. Çак администраци пуç пулса тăнипе Америка империалисчĕсем Англипе Иранăн нефть компанийĕ йышăннă вырăна хăйсем йышăнасшăн.

Хаçатсем палăртнă тăрăх, митингсене хăваласа салатнă чухне полици хулан пĕр районĕнче пăшалсенчен сывлăшалла пенĕ. Февралĕн 21-мĕшĕнче Тегеранра пурĕ çĕр çамрăка арестленĕ.

«Кейхан» тата «Дад» хаçатсем: арестленĕ çамрăксенчен пĕр пайне Персидски заливри Харег (Харг) утравĕ çине кăларса яраççĕ пулмалла, тесе çыраççĕ. Çак утрав çинче Америка империалисчĕсемпе вĕсен Иранри тарçисене хирĕç тăнăшăн Тегеранран кăларса янă çамрăк рабочисемпе студентсем нумай.

«Бесуе аянде» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка империалисчĕсен ирсĕр ĕçĕсене хирĕç протестлесе икĕ уйăх каялла Тегеран университетĕнче пулса иртнĕ демонстрацие хутшăннăшăн арестленĕ студентсем 60 çын ытла, тата влаçсем юлашки вăхăтра арестлесе Тегеран тĕрмине хупса лартнă миршĕн тăракансен пысăк ушкăнĕ, хăйсене судпа следствисĕр тĕрмере тытса усранине хирĕç протестлесе, апат йышăнмасăр выçă ларма йышăннă.

„Европа çарĕ“ тенĕскерне тăвассине хирĕç пыракан юхăм

РИМ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тăракансен Италири комитечĕн секретарначĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: февралĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Италире «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» тенĕскерне тăвассине хирĕç кĕрешмелли тата ăна тăрă шыв çине кăлармалли эрнелĕх пулса иртет. Çак эрнелĕх хушшинче мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитетсем общественноçа «Европа çарĕ» тенĕскерне тăвасси çинчен йышăннă договорпа паллаштараççĕ, мĕншĕн тесен çак договора пуçаракансем договорта каланă нациллĕ никама пăхăнманлăха пÿлсе тăракан статьясем çинчен парламентпа халăха пĕлтерме хăймаççĕ.

ШУПАШКАРТИ ПИОНЕРСЕН ÇУРТĔНЧЕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: радиотехникăна вĕренмелли кружок занятийĕ. Инженер В. С. Васильев юлташ (варринчи) çамрăк радиолюбительсене радиоприемник схемипе паллаштарать.

М. ЕГОРОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ТИНĔС-ÇАР КЛУБĔНЧЕ

Шупашкарти тинĕс-çар клубĕн пĕр пÿлĕмне çамрăксем пухăннă. Вĕсем—тинĕс-çар клубĕнче вĕренекен Досааф членĕсем.

— Паян эпир хăвăрт çÿрекен катерăн моторне вĕренме тытăнатпăр,—тет мотористсен курсĕн руководителĕ А. Смирнов юлташ.—Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче шыв çинчи çапăçусенче çакăн пек катерсем пысăк вырăн йышăнчĕç. Паттăр совет морякĕсем тĕлĕнмелле паттăрлăхпа хăюлăх кăтартрĕç, тăшмана пыра-пыра çапрĕç. Шывра пулнă чаплă çĕнтерÿсенче хăвăрт çÿрекен катерсем хисеплĕ вырăн йышăннă. Халĕ ĕнтĕ моторпа паллашăпăр...

Тимлĕ итлеççĕ Досааф членĕсем руководителĕн сăмахне, вăл каланине пĕлме, ăнланма тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть кунта мотористсен виçĕ уйăхлăх курсĕ хăйĕн ĕçне вĕçлерĕ. Хулари тĕрлĕ предприятисемпе учрежденисенчи çамрăксем моторист специальноçне туянчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен пĕлĕвĕпе производствăра туллин усă кураççĕ. Н. Абрамов, В. Петров, Х. Матвеев çамрăксем «Водоснет» трестĕнче, Н. Михайлов—Атăл леш енчи электростанцире, С. Алексеев «Заготзерно» пунктĕнче мотористсем пулса ĕçлеççĕ.

— Тинĕс-çар клубĕнче вĕренсе пĕлÿ илни маншăн питĕ кирлĕ пулчĕ. Эпир хамăр пĕлÿпе мирлĕ ĕçре усă куратпăр, — тет курсран вĕренсе тухса моторист специальноçне илнĕ С. Алексеев çамрăк.

Вăл мотористсен курсĕнче çĕнĕрен вĕренме пуçланă çамрăксемпе сăмах пуçларĕ, кирлĕ сĕнÿсемпе канашсем пачĕ.

— Лайăх специальность суйласа илнĕ эсир. Пархатарлă специальность, — терĕ вăл.

Иртнĕ çулта Шупашкарти тинĕс-çар клубĕнчен сигнальщиксем, рулевойсем, радиотелеграфистсем, водолазсем, моделистсем тата ытти специалистсем те вĕренсе тухрĕç.

Шупашкарти кооператив техникумĕнче вĕренекен Кримкова тинĕс-çар клубĕнчи сигнальщиксен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ вăл хăй сигнальщиксен ушкăнне ертсе пырать.

Досааф членĕсем тинĕс-çарĕн нумай енлĕ специальноçĕсене тимлĕн, тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕренекенсем хушшинче—Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводра, пир-авăр комбинатĕнче, лента тĕртекен фабрикăра, «Заготзернора» ĕçлекенсем, педагогика, ялхуçалăх институчĕсенче тата техникумсемпе вăтам шкулсенче вĕренекенсем пур.

Тинĕс-çар клубĕ ĕçсыннисем хушшинче пропаганда ĕçне анлăн туса пырать. Клубăн обществăллă инструкторĕсем, активлă досаафовецсем хулари ĕçсыннисем хушшинче вуншар лекцисемпе докладсем туса панă, калаçусем иртгернĕ.

Катер командирĕ К. Ятмасов «Росглаввино» совхозĕнчи фермăра ĕçлекенсем валли «СССР—аслă тинĕс держави» тема тăрăх лекци вуласа панă. Д. Облинов Сосновка поселокĕнчи тата Шупашкарти çамрăксем валли «Ленин—Сталин партийĕ—Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотне организацилекенĕ тата воспитани параканĕ» тема тăрăх лекцисем иртгернĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн кунне хатĕрленнĕ май, клуб чылай ĕçсем туса иртгернĕ. Клубра пысăк выставка усăлнă. Унта Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чапа тухнă моряксене, вырăс флочĕ мĕнле аталанса, ÿссе пынине, тинĕс çинче пулса иртнĕ çапăçусене сăнласа кăтартнă.

Клуб çумĕнче лаборатори ĕçлет. Çак лаборатори пулăшнипе Досааф членĕсем модельсем нумай туса хатĕрленĕ.

Тинĕс-çар клубĕ хăйĕн воспитанникĕсемпе çыхăну тытать. Тинĕс-Çар Флотĕнче службăра тăракан офицерсемпе матроссем клуб ячĕпе çырусем çыраççĕ. Унта вĕсем хăйсене тинĕс-çар пĕлĕвĕ панăшăн тав тăваççĕ, клубра вĕренсе илнĕ пĕлÿ службăра питĕ усăллă пулни çинчен çыраççĕ.

— Пирĕн çамрăксем шыв спорчĕпе хытă интересленеççĕ. Тинĕс-çар клубĕнче пулас морякcене вĕренме пур условисем те çителĕклĕ. Çамрăксем хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстереççĕ. Вĕсен ĕмĕчĕ—клубра вĕренсе илнĕ пĕлÿсене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, мире юратакан совет халăхĕн телейĕшĕн парасси,—тет клуб начальникĕ Василий Савельевич Кравченко юлташ.

А. ЖИРНОВ.

Лайăх ĕçлекен драма кружокĕ

ЭЛĔК. Тавăт ялĕнче тăваттăмĕш çул колхоз клубĕ ĕçлет. Унăн ĕçĕ çултан-çул вăйланса пырать. Клуб ăшне лайăх илемлетнĕ. Каннă вăхăтра колхозниксемпе ялти çамрăксем клубра радио итлеççĕ, шашкăлла выляççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ. Агитаторсем час-часах докладсемпе калаçусем иртгереççĕ.

Клуб çумĕнче драма кружокĕ аван ĕçлет. Иртнĕ çулта 15 спектакль кăтартнă. Кăçал «Нарспи», «Ялта», «Айдар», «Ывăлĕ патĕнче», «Савнă тусăм, хура куçăм» пьесăсене çичĕ хутчен лартса пачĕç. Спектакльсем лартма кружок çывăхри ялсенчи клубсене те кайса килет.

Иртнĕ çулта кружок членне—Е. Смирновăна халăх творчествин Шупашкарти çурчĕ хисеп грамотипе наградăланă. П. Ивановпа Ф. Васильев комсомолецсем тата çавăн пекех А. Маркова комсомолка ВЛКСМ Чăваш обкомĕн хисеп грамотине илме тивĕçлĕ пулнă. Районти культурăпа çутĕç пайĕ клуба хуткупăс панă.

И. Георгиев юлташа драма кружокĕн пахa ĕçĕсемшĕн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Культурăпа çутĕç управленийĕ икĕ хутчен, ВЛКСМ Чăваш обкомĕ виçĕ хутчен хисеп грамоти парса наградăланă. Георгиев юлташ кăçал Мускаври Н. К. Крупская ячĕпе тăракан Пĕтĕм Союзри халăх творчестви çурчĕ çумĕнчи виçĕ çул вĕренмелли курса заочно вĕренсе пĕтерчĕ.

С. ТИХОНОВ.

Радио кĕртеççĕ

ЙЕПРЕÇ. Султалăк каялла «Спотара» поселокĕнче радиоузел турĕç. Юлашки вăхăтра ку радиоузелтан Мерчĕкри вăрман участокĕнчи рабочисен, Бугуян ялĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен килĕсене радио кĕртнĕ.

Ял Совечĕ тăрăшнипе февралĕн 14-мĕшĕнче Эконом ялне те радио кĕртрĕç. Çак кунсенчех пур колхозниксен килĕсене те радиофикацилеççĕ.

Г. РУСАНОВ.

Спорт ăмăртăвĕсем

Февралĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта тĕрлĕ спорт ăмăртăвĕсем пулса иртрĕç. «Молния» спорт обществи стадионĕнче хоккей вăййипе республикăра мала тухмалли ăмăрту пычĕ. «Спартак» тата «Пищевик» командисен тĕлпулăвĕнче спартаковецсем 17:0 шутпа çĕнтерчĕç. Чапаевски поселок команди «Молния» спорт обществи хоккеисчĕсене 1:14 шутпа выляса ячĕ.

Каçхине «Молния» спорт обществи каткĕнче çамрăксем чылайччен конькипе ярăнчĕç.

Атăл леш енче, учительсен канмалли çурчĕ çывăхĕнче, йĕлтĕрçĕсен республикăра мала тухмалли ăмăртăвĕ пычĕ.

ПĔЛТЕРНИ

Февралĕн 24-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотекинче И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă ĕçне харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли çак тема тăрăх лекци пулать: «И. В. Сталин юлташ социализмăн экономикăллă тĕп законне уçса никĕслени».

Лекцие экономикăллă наукăсен кандидачĕ П. Л. Лебедев юлташ вулать.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Февралĕн 24-мĕшĕнче чăвашла спектакль «ÇЕМЬЕ ЧЫСĔ»
Февралĕн 25-мĕшĕнче чăвашла спектакль «АЙДАР»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01299 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.